ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН ТАТА ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

1952 ҫул
Март
1
ШĂМАТКУН
№ 44 (8696)
Хакĕ 20 пус.
35-мĕш ҫул тухать.

ПАЯНХИ НОМЕРТЕ:

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) обкомĕнче (1 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли стахановла уйăхлăх (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂҪĔ: И. Александров.—Шкулсенчи парторганизацисен ĕҫне вăйлатни кирлĕ; Н. Цветков.—Парти вĕренĕве куллен ертсе пымалла (2 стр.).
А. Эсхель.—Чăваш халăх искусствин ҫĕнĕ ҫитĕнĕвĕсем (2 стр.).
Е. Афанасьев.—Халăх тарҫи (2 стр.).
Колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ.
А. Яблонский.—Выльăх-чĕрлĕх тухăҫлăхне чылай ӳстеретпĕр; Д. Кирпичев.—Вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлеме тăрăшасҫĕ (3 стр.).
С. Петров.—Эксплуататорла строя витĕмлĕ питлекен писатель. Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 ҫул ҫитнĕ тĕле (3 стр.).
М. Иванов.—Типĕ ҫырмасене ишĕлме чарасси — питех те кирлĕ ĕҫ (3 стр.).
Вĕрҫăра бактерилле хĕҫпăшалпа усă курнине хирĕҫ (4 стр.).
Корейăри ĕҫсем (4 стр.).
Хамăр республика тăрăх (4 стр.).

Ялхуҫалăх наукин ҫитĕнĕвĕсемпе малта пыракансен опытне—колхоз производствине

Ленин—Сталин партийĕ организацилесе, хавхалантарса пынипе, пирĕн миллионшар колхозниксем пултаруллă ĕҫе хутшăнчĕҫ. Вĕсем малта пыракан совет агрономипе биологи науки кăтартăвĕсене анлăн ĕҫе кĕртсе пысăкрах пулса тăчĕҫ. Совет ҫынни халĕ наукăна алла илнипех ҫырлахмасть, вăл наука вĕрентнине производствăра—ĕҫре тĕрĕслет, наукăна хăйĕн пуян опычĕпе пуянлатма пулăшать, наукăра хăй те ҫĕнĕ ҫулсем хывать.

Совет ҫĕршывĕнче ĕҫлекен ҫын пысăк хисепре. Вăл хăйшĕн, хăй класĕшĕн, обществăшăн ĕҫлет. **«Вăл лайăх ĕҫлет пулсан,—тет Сталин юлташ,—тата хăй мĕн пама пултарнине обществăна пĕтĕмпех парать пулсан, вăл ĕҫ геройĕ, вăл чапа тухать».**

Ялхуҫалăхĕ умне большевиксен партийĕ лартнă тĕп задачăна пурнăҫлассишĕн—тырпул тухăҫлăхне малалла ӳстерессишĕн тата выльăх-чĕрлĕх хисепне йышлатнипе пĕрлех унăн тухăҫлăхне хăвăрт хăпартассишĕн кĕрешсе, колхозăн хастарлă ҫыннисем ĕҫре пысăк опыт туянчĕҫ. Вăйлă тырпулшăн, йышлă та тухăҫлă выльăх-чĕрлĕхшĕн вăрçă хыҫҫăнхи ҫулсенче сарăлнă массăллă социализмла ăмăртура ялхуҫалăхĕнче ҫĕнĕлле ĕҫлекен ҫын—малта пыракан ҫарĕ ӳссе ҫитĕнчĕ. Вĕсем—Социализмлă Ĕҫ Геройĕсем, колхоз производстви мастерĕсем—ялхуҫалăхне малалла вăйлăн аталантармалли ҫĕнĕ майсене кăтартса парĕҫ.

Совет науки кăтартăвĕсене анлă пурнăҫласа пырса, пирĕн республикăри малта пыракан колхозсем халĕ чылай пысăк тухăҫлă тырпул туса илеҫҫĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз вăтам шутпа пĕтĕм кашни гектартан 168 пăт ыраш, 237 пăт ытла сурăх тулă пухса кĕртрĕ. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан ялхуҫалăх артелĕ кашни гектартан 157 пăт ыраш, 154 пăт кĕрхи тулă, 129 пăт ҫурхи тулă туса илчĕ. Ҫакăн пек паха тĕслĕхсем ытти районсенче те нумай.

Республикăри нумай колхозсем общественнăй выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес ĕҫĕнче, унăн тухăҫлăхне чылай хăпартас тĕлĕшпе те ӳсĕмсем турĕҫ. Вăрнар районĕнчи «Хĕрлĕ Ĕҫтне» колхозра 1951 ҫулта кашни ĕнерен пĕрер пăру пăхса ҫитĕнтернĕ, 100 сурăхран 112 путек илнĕ. Ку колхоз кăҫал кашни сăвакан ĕнерен 2.000-шер литр сĕт илессишĕн, кашни сысна амăшĕнчен 14 ҫура илессишĕн, кашни сурăхран виҫĕ килограмм ҫурă ҫăм касса илессишĕн, кашни чăхран 110 ҫăмарта илессишĕн кĕрешет. Ытти районсенчи колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫĕн мастерĕсем—Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхози лашра Заплаткина юлташ, Етĕрне районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозри выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕ Крыневский юлташ, Улатăр районĕнчи «Победа» колхозра сыснасем пăхакан Данилушкина юлташ паха ҫитĕнӳсем турĕҫ. Ялхуҫалăх механизаторĕсем хушшинче те малта пыракансем йышлă.

Совет агробиологи наукин ҫитĕнĕвĕсемпе анлăн усă курни, малта пыракансен опытне вăйлăн сарни—халĕ ялхуҫалăхне вăйлатмалли чи кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать. Акă мĕншĕн ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн пленумĕ «Ялхуҫалăхне вăрҫă хыҫҫăнхи вăхăтра вăйлатмалли мерăсем ҫинчен» йышăннă постановленире ССР Союзĕн Ялхуҫалăх министерствипе ССР Союзĕн Совхозсен министерствине тата вырăнти партипе совет организацийĕсене ялхуҫалăх наукин ҫитĕнĕвĕсене производствăра хăвăртрах ĕҫе кĕртес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнма хушрĕ.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ пирĕн республика умнe ялхуҫалăхне аталантарас тĕлĕшпе пысăк та ответлă задачăсем лартрĕ. Ҫитес ик-виҫĕ ҫул хушшинче колхозсенче тĕштырă тухăҫлăхне гектар пуҫне 18 центнера ҫити ӳстермелле. Кунпа пĕрлех кок-сагыз, йĕтĕн-долгунец, кантăр сӳсĕ, махорка, ҫĕрулми, тымар-ҫимĕҫ, нумай ҫул ӳсекен курăксен, пĕр ҫул ӳсекен курăксен, силос валли акакан культурăсен тухăҫлăхне нумай ӳстермелле. Кашни ĕнерен 1.800 литр сĕт суса илмелле, кашни сурăхран—виҫĕ килограмм ҫăм касса илмелле, кашни чăхран 110 ҫăмарта илмелле. Ҫак пысăк задачăна пурнăҫлама пирĕн республикăн пур майсем те пур.

Пирĕн колхозсен, машина-трактор станцийĕсен, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисен, ялхуҫалăх аталантарас енĕпе малта пыракан колхозсен, районсен тата ҫавăн пекех уйрăм мастерсен ҫитĕнĕвĕсене пĕтĕҫтерсе сарас пулать. Анчах ку тĕлĕшпе республикăра хăшпĕр ĕҫсене кăна тунă-ха. Пĕтĕм ҫĕршывĕпе чапа тухнă Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз, ҫавăн пекех Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз опытне сарас тĕлĕшпе республикăра малтанхи утăмсене кăна тунă. Ҫакă вăл, паллах, Чăваш АССР Ялхуҫалăх министерствин унăн вырăнти органĕсен ҫителĕксĕр ĕҫленипе, партипе совет организацийĕсен ҫителĕксĕр руководительсемпе пулнă. Халĕ ĕнтĕ, ялхуҫалăх техникăна пуянланса пынă май, колхозсен организацине хуҫалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклентернĕ май, вĕсенче тырпул туса илес тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫĕн мастерĕсем ӳссе ҫитĕннĕ май, **малта пыракансен опытне пур ҫĕрте те массăллăн ĕҫе кĕртме кирлĕ условисем кашни колхозрах пур.** Ҫавăнпа малта пыракансен опытне кулленех тăрăшса пухмалла, пĕтĕҫтермелле, массăсем хушшине хăвăрт сармалла,—ҫак вăл ҫĕр ĕҫ органĕсемпе партипе совет организацийĕсен, республикăри тата районсенчи хаҫатсен, издательствăн, радиоинформаци комитечĕн хисеплĕ те ответлă задачи пулса тăрать.

«Миллионшар ĕҫҫыннисем, рабочисемпе хресченсем ĕҫлесе, пурăнаҫҫĕ, кĕрешеҫҫĕ. Ҫав ҫынсем усăсăр пурăнмаҫҫĕ. Ун пирки, тата вĕсем пурăнса, [illegible] практикăпа опыт пухни пирки нимĕн те пулмасть-и? Ҫак опытран ӳкĕнмесĕр тăракан руководительсем пулма пултараҫҫĕ-и? Пирки никĕнлеме пулать-и вара?»—тенĕ Сталин юлташ.

Анчах ҫавăн ҫинчен Чăваш АССР Ялхуҫалăх министерствин пропагандин управленийĕнче ĕҫлекенсем манпă пулас. Вĕсем ялхуҫалăхĕнче малта пыракансен опытне пĕтĕҫтерсе тата ăна колхоз производствине кĕртес тĕлĕшпе сахал ĕҫлеҫҫĕ. Акă, пĕр тĕслĕх. Республикăн сурçĕр районĕсенчи чылай колхозсенче—кĕлĕ тăпрасем. Унта вăйлă тырпул туса илес тесен, ҫĕре извеҫлесе тăмалла. Ҫĕре извеҫлени пирĕн нумай колхозсенче пысăк тухăҫ пачĕ. Агротехникăн ҫак пĕлтерĕшлĕ те паха мероприятине пурнăҫлас ĕҫри хальхи тĕп чăрмав вăл—шăпах ĕнтĕ чылай ҫĕрте извеҫленин уссине пĕлменни пулса тăрать. Уссине пĕлменни ĕҫри шанчăка пĕтерет, хăшпĕр ҫĕрте ҫак паха ĕҫе хирĕҫле шухăшсем ҫуратать. Ҫĕре извеҫленĕ хăш колхоз опытне сарнă-ха ялхуҫалăх пропагандин управленийĕнче ĕҫлекенсем?

Малта пыракансен опытне сарма Чăвашсен государство издательстви те ҫителĕксĕр пулăшать-ха. Вăл юлашки икĕ-виҫĕ ҫул хушшинче Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсен опычĕ пирки пĕр-ик пĕчĕк кĕнеке кăларнипех лăпланчĕ. Паллах, халĕ малта пыракан колхозсен, уй-хир ĕҫĕсен ăстисемпе выльăх-чĕрлĕх пăхакансен паха опытне ытларах ҫутатни кирлĕ. Ялхуҫалăх институчĕ те ялхуҫалăхĕнче малта пыракансен опытне анлăн тĕпчесе пĕлес, ăна пичет урлă пропагандăлас енĕпе кирлĕ пек ĕҫлемест-ха.

Ялхуҫалăх наукин ҫитĕнĕвĕсемпе малта пыракансен опытне колхоз производствине кĕртес ĕҫри ҫитменлĕхсене чăтса тăма юрамасть. Партипе совет тата ҫĕрĕҫ органĕсен ку ĕҫе тĕпрен вăйлатмалла.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) обкомĕнче

Республикăри районсем 1951—1952 ҫулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăртса ĕҫленин итогĕсем ҫинчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) обком бюровĕ кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тултарассишĕн районсем хушшинче 1951 ҫулхи IV-мĕш кварталта пынă социализмлă ăмăртура **Муркаш районĕ** мала тухнине палăртнă. Ку район сезон планне 1952 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарнă.

Муркаш районне Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) обкомĕн куҫса ҫӳрекен **Хĕрлĕ Ялавне** тата вăрман хатĕрлевĕнче уйрăмах палăрнă колхозниксене, ял Совечĕсемпе колхоз работникĕсене премилеме 10 пин тенкĕ укҫа уйăрса памалла тунă.

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе

СТАЛИНО. Донбасри металлургсем СССР Верховнăй Совечĕн сессине производствăри ҫĕнĕ ҫитĕнӳсемпе кĕтсе илеҫҫĕ.

«Азовсталь» завод коллективĕ производствăн пур заданийĕсене те иртерсе тултарать. Ĕнер блуминг цехĕнчи прокатчиксем Сталино облаҫĕнче пуриччен малтан март шучĕпе ĕҫлеме пуҫларĕҫ. Аслă оператор-вальцовщик Дмитрий Богатыренко пуҫарăвĕпе, кунта пур участоксенче те метала хăвăрт прокат тăвассишĕн ăмăрту пырать.

Краматорскри Куйбышев ячĕпе тăракан заводри хурçă шăратакансемпе прокатчиксем те кунсерен планран иртерсе металл параҫҫĕ.

ТЕМИР-ТАУ. Казах металлурги заводĕнчи прокатчиксем СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ уҫăлнă тĕле парнесем хатĕрлеҫҫĕ. Оборудованипе тухăҫлă усă курнипе пула, вĕсем планран иртерсе кунсерен вуншар тонна продукци туса кăлараҫҫĕ.

Февральти плана срокчен тултарни ҫинчен паян «280» стан коллективĕ рапорт панă.

Прокатчиксем кашни производство операцийĕнчех материалсем перекетлессишĕн кĕрешеҫҫĕ. Кашни операци тăрăх топливо тата металл перекетленине кунсерен шута илсе пыраҫҫĕ. Февральте 50 тонна кăмрăк, вуншар тонна металл перекетленĕ.

ДУБРИНИЧ (Закарпатски облаҫĕ). Михаил Ходанич мастер участокĕ, вăрман хатĕрлемелли кĕркуннепе хĕллехи программăна Закарпатьере чи малтан вĕҫленĕскер, СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе планран иртерсе 2 пин кубометр йывăҫ хатĕрлерĕ.

Кунта ĕҫ итогĕсене сехет графикĕ тăрăх шута илнĕ. Ҫав ĕҫе пурнăҫа кĕртекен Михаил Ковач бригади вăрман хатĕрлессине тата турттарассине 25 процент чухлĕ хăвăртлатрĕ.

БАКУ. Бакури нефтяниксем СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ пуҫланнă тĕле, социализмла ăмăртса ĕҫлесе, ҫĕнĕ ҫитĕнӳсем тăваҫҫĕ.

Ĕнер «Лениннефть» тресчĕн виҫҫĕмĕш промысла коллективĕ, Курбан Абдуллаев новатор пуҫарнă меслетпе ĕҫлесе, нефть кăлармалли икĕ уйăхри плана тултарчĕ. Ҫакна нефть кăларакан вырăнсен 90 процентне пĕрмаях лайăх эксплоатацилесе тума пултарнă.

Планран иртерсе ҫĕршер тонна шĕвĕ топливо—ҫакăн пек ĕнтĕ «Орджоникидзенефть» тресчĕн тăххăрмĕш промыслинчи Камашински мастер ертсе пыракан бригада тунă ҫитĕнӳ. Кунта нефть кăлармалли вырăнсем тапти-сыпписĕр ĕҫлеҫҫĕ. Бригада халиччен ĕҫлемен нефть кăлармалли икĕ вырăна ĕҫлеттерме пуҫланă.

ХАРЬКОВ. Ĕнер электромонтаж изделийĕсем тăвакан завод коллективĕ, СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса ĕҫлесе, ҫĕнĕ ҫитĕнӳ тунă. «Куйбышевгидрострой» валли хăватлă трансформаторлă икĕ подстанцие срокчен пĕр уйăх маларах туса хатĕрленĕ. Детальсене пĕр вăхăтрах поток меслечĕпе хăвăрт пухса, стахановецсем монтаж ĕҫĕсен хăвăртлăхне икĕ хута яхăн ӳстернĕ.

Завод Сталинград гидроэлектростанцийĕ валли те оборудовани нумай туса хатĕрленĕ.

Февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС).

Торф сезонĕ умĕн

СССР Ҫăмăл промышленность министерствин торф предприятийĕсенче ҫитес сезонра торф кăларма хатĕрленес тĕлĕшпе социализмлă ăмăрту анлă сарăлнă.

Кăҫал торф кăларас ĕҫре нумай ҫĕрте пысăк тухăҫлă ҫĕнĕ оборудованипе усă курма тытăнаҫҫĕ. Багерăа-элеваторлă машинăсен йышĕ пĕр хут ҫурă ӳсет. Кăларакан топливăна механизациленĕ майсемпе сарса типĕтмелле тăваҫҫĕ. Ҫавăн пек машинăсен хисепĕ, иртнĕ ҫулхипе танлаштарсан, пилĕк хут ӳсмелле. Вак торфа кăларса тиенĕ чухне те механизмсемпе анлă усă курма палăртнă.

Экскаваторщиксем, трактористсем, кăларнă торфа типĕтме сарса тухакан тата пухакан машинăсен водителĕсем халĕ курссенче вĕренсе, хăйсен квалификацине ӳстереҫҫĕ.

Чылай предприятисенче торф оборудованине юсаса пĕтернĕ. (ТАСС).

Ҫĕнĕ тинĕс хĕрринче

ДОН ҫинчи РОСТОВ, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Цимлянски тинĕсĕнче шыв кашни кунах хушăнса пырать. Дон шывĕн шайĕ ултă метра яхăн хăпарчĕ. Ĕлĕк халăх пурăннă вырăнсене шыв илме тытăнчĕ.

[illegible]янская [illegible] халĕ ҫĕнĕ тинĕ[illegible] пырать. Гидроузел строит[illegible] ҫĕнĕтсе илемлетеҫҫĕ. Нумаях пулмасть, кунта кинотеатр ĕҫлеме пуҫларĕ. Ача яслисен ҫуртĕсене тата больницăн тĕп корпусне туса пĕтерес ĕҫ вĕҫленсе пырать. Станицăри Советсен ҫуртне, Социализмлă культура ҫуртне, Госбанк ҫуртне тума тытăннă.

Станицăна гидроэлектростанции халĕ тăвакан поселокĕ те кĕмелле. Вăл станицăн чи илемлĕ вырăнĕ пулать. Тинĕс хĕрринче коммунизмăн аслă стройкинчи паттăр ĕҫе кăтартакан вăтăр метр ҫӳлĕш обелиск туса лартаҫҫĕ. Обелиск йĕритавра тĕрлĕ скульптурăсене вырнаҫтарса тухаҫҫĕ.

2.700 пин турист

Туристсен ҫуркуннепе ҫуллахи сезонне хатĕрленес ĕҫ пуҫланчĕ. Туристсемпе экскурсантсен 72 базине юсаҫҫĕ. Вĕсем ҫĕршыври чи илемлĕ вырăнсенче пулаҫҫĕ. ВЦСПС секретариачĕн решенийĕ тăрăх, кăҫал 47 маршрут организацилеҫҫĕ.

ТАСС корреспондентне ВЦСПС-ăн туризмпа экскурсисен центральнăй управленийĕнче пĕлтернĕ тăрăх, экскурсисемпе походсене 2.700 пин ҫын ытла, иртнĕ ҫулхинчен 700 пин ҫын ытларах хутшăнмалла.

Туристсем Кавказ леш енчи маршрутпа хытă интересленеҫҫĕ. Курса ҫӳрекен туристсем И. В. Сталин юлташăн революцилле ĕҫĕ пуҫланнă Гори, Баку, Тбилиси, Батуми хулисенче тата ытти вырăнсенче пулаҫҫĕ.

Летчиксем аслă стройкăсем валли грузсем ҫитерсе параҫҫĕ

КИЕВ, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Киеври аэропортран гражданавиацийĕн летчикĕ Колесников тытса пыракан самолет вĕçсе кайрĕ. Ун ҫине Каховка гидроэлектростанцийĕн строителĕсем валли 1.300 килограмм ытла груз тиенĕ. Вăл ҫав груза гидроэлектростанци тунă ҫĕре леҫсе парать.

Аслă стройкăсем валли кирлĕ грузсене республикăри аэропортсенчен кашни кунах ăсатаҫҫĕ. Летчиксем строительсем валли канатсем, электромоторсем, механика оборудованийĕ, инструментсем, медикаментсем илсе каяҫҫĕ.

Украина ССР-ĕ. Каховка гидроузелĕн Ключевой ялĕ районĕнчи строительсен ҫĕнĕ поселокри Карл Маркс урамĕ.
М. МЕЛЬНИК фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Февралĕн 15-мĕшĕ | **Вăрман хатĕрлемелли плана тултармалли стахановла уйăхлăх** | Мартăн 15-мĕшĕ

«Чăвашвăрман» трест тата ĕҫҫынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, 1951—1952 ҫулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана срокчен тата иртерсе тултарнăшăн республикăри Хисеп хăми ҫине ҫак колхозсене кĕртнĕ:

КОМСОМОЛЬСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

32. **«Алга» колхоз** (председателĕ **Г. Салахов** юлташ, пуҫламăш парторганизаци секретарĕ **М. Аншев** юлташ, йывăҫ касса хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **З. Ахметов** юлташ, каснă йывăҫа турттарса кăларакан бригадăн бригадирĕ **Т. Аллиулин** юлташ). Колхоз йывăҫ касса хатĕрлемелли плана 106,4 процент, каснă йывăҫа ҫул хĕррине илсе тухмалли плана 108,4 процент, турттарса кăлармалли плана 111,7 процент тултарнă.

33. **«Хунав» колхоз** (председателĕ **М. Кузнецов** юлташ, пуҫламăш парторганизаци секретарĕ **Н. Парков** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **И Ухандеев** юлташ). Колхоз йывăҫ касса хатĕрлемелли плана 108 процент, каснă йывăҫа ҫул хĕррине илсе тухмалли плана 108 процент, турттарса кăлармалли плана 100 процент тултарнă.

34. **Калинин ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Иванова** юлташ, пуҫламăш парторганизаци секретарĕ **И. Яковлев** юлташ). Колхоз йывăҫ касса хатĕрлемелли плана 111 процент, турттарса кăлармалли плана 106,5 процент тултарнă.

ПАРАЧКАВ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

35. **«Ударник» колхоз** (председателĕ **И. Макаров** юлташ, пуҫламăш парторганизаци секретарĕ **И. Краснов** юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ **Б. Баланов** юлташ). Колхоз йывăҫ касса хатĕрлемелли плана 111 процент, каснă йывăҫа ҫул хĕррине илсе тухмалли плана 110 процент, турттарса кăлармалли плана 108,8 процент тултарнă.

36. **«Красный пахарь» колхоз** (председателĕ **Ф. Волков** юлташ, пуҫламăш парторганизаци секретарĕ **А. Никитин** юлташ). Колхоз йывăҫ касса хатĕрлемелли плана 110,8 процент, каснă йывăҫа ҫул хĕррине илсе тухмалли плана 110,9 процент, турттарса кăлармалли плана 111,7 процент тултарнă.

37. **Киров ячĕпе тăракан колхоз** (председателĕ **Н. Куторкин** юлташ, пуҫламăш парторганизаци секретарĕ **В. Панышев** юлташ). Колхоз йывăҫ касса хатĕрлемелли плана 110,7 процент, каснă йывăҫа ҫул хĕррине илсе тухмалли плана 111 процент, турттарса кăлармалли плана 108 процент тултарнă.

Вăрманпромхозăн пысăк ӳсĕмĕ

ЙĔПРЕҪ. (Телефонпа). Вăрманпромхоз коллективĕ, СССР Верховнăй Совечĕн сессине парне хатĕрлесе, ҫĕнĕ ҫĕнтерӳ турĕ: механизмсемпе тата хăйĕн лавĕсемпе йывăҫ турттарса кăлармалли сезонти плана срокчен тултарчĕ. Ҫак ҫитĕнĕве тума шоферсемпе ытти механизаторсем, лавҫăсемпе грузчиксем хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕҫлени, пуян техникăпа лайăх усă курассишĕн тимлĕ кĕрешни пулăшрĕ.

Стахановецсем уйрăм [illegible]менăсенче ĕҫ нормине тултарнипе лăпланса лармаҫҫĕ, уйăхран уйăха, кварталтан квартала тухăҫлă ĕҫлеме тăрăшаҫҫĕ. Чылай шоферсем йывăҫ турттарса кăлармалли сезонти нормăна пĕр-ик уйăх маларах пурнăҫларĕҫ. Комсомолец-шофер Н. Мокеев юлташ сезонти нормăран иртерсе 166 фестметр, П. Сарайкин шофер—135 фестметр йывăҫ турттарса кăларчĕҫ. Уйрăмах пĕр автомашинăпа ĕҫлекен Ф. Кутузовпа Ф. Барышев шоферсен ҫитĕнĕвне палăртас пулать. Вĕсем сезонти ĕҫ нормине 126 процент ытла тултарчĕҫ, заданирен иртерсе 475-шер фестметр йывăҫ турттарса кăларчĕҫ.

Шоферсем тухăҫлă ĕҫлесси каснă йывăҫа ҫул хĕррине илсе кăларакан лавҫăсемпе грузчиксенчен сахал мар килет. Пĕренесене хăвăрт тиесе пушатмасан, автомашинăсем ахаль чылай ларма пултараҫҫĕ. Пирĕн шоферсемпе грузчиксем килĕштерсе ĕҫлеҫҫĕ, пĕр-пĕрне юлташла пулăшаҫҫĕ. Н. Гаврилкин, Г. Яковлев, А. Ваганов, П. Вдовин грузчиксем ĕҫ нормине куллен иртерсе тултараҫҫĕ, шоферсене тухăҫлă ĕҫлеме пулăшаҫҫĕ.

Юлашки вăхăтчен вăрманпромхозăн каснă йывăҫа ҫул хĕррине илсе тухма тракторсем пулман. Ҫавăнпа лавҫăсем тухăҫлă ĕҫленин пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк пулнă. Кадрти нумай лавҫăсем ĕҫ нормине тăтăшах иртерсе тултараҫҫĕ. Н. Сабанов, М. Салхутдинов, И. Боровко лавҫăсем сезонти ĕҫ нормине иртерсе тултарчĕҫ. Уйрăмах С. Новиков лавҫăн паха тĕслĕхне палăртас пулать. Вăл сезонти задание 141 процент тултарчĕ. Норма тăрăх куллен пилĕк фестметр ытларах йывăҫ ҫул хĕррине илсе тухмалла пулсан, вăтам шутпа вунă фестметра яхăн илсе тухать.

Электропăчкăпа йывăҫ касса хатĕрлекен мотористсем В. Даниловпа П. Васильткин юлташсем ҫĕнĕ техникăна лайăх вĕренсе ҫитрĕҫ, сезонти нормăна чылай иртерсе тултарчĕҫ.

Сталин юлташ патне янă ҫырура йышăннă обязательствăсене пурнăҫласа, чылай колхозсем государство заданине срокчен тата иртерсе тултарчĕҫ. Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхоз планран иртерсе 150 фестметр йывăҫ касса хатĕрлерĕ, вуншар фестметр турттарса кăларчĕ. Апла пулин те ку колхоз членĕсем вăрманта ҫав-ҫавах тăрăшса ĕҫлеҫҫĕ. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз плана касса хатĕрлес енĕпе те, турттарса кăларас енĕпе те иртерсе тултарчĕ.

Йĕпреҫ районĕнчи «10 лет Октября» колхозпа «Искра» колхоз членĕсем те хăйсен сăмахне чыслă пурнăҫлаҫҫĕ.

Февраль уйăхĕнче вăрманпромхоз планран иртерсе 73 вагон пĕрене ăсатрĕ. Коллектива Сталинград гидростанцийĕ тунă ҫĕре шпал тăратма задани панăччĕ. Ăна вăл февралĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурнăҫларĕ. Вăрманпромхоз Донбасри шахтăсем валли пĕрене, Мускав хулинчи нумай хутлă ҫуртсем валли юман тăратмалли заданисене те иртерсе тултарчĕ.

СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ ячĕпе чылай рабочисем стахановла вахтăна тăчĕҫ, ҫĕнĕ обязательствăсем йышăнчĕҫ. Коллектив 1951—1952 ҫулсенчи кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăҫ хатĕрлемелли плана пĕтĕмĕшпех мартăн 10-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн, Тăван ҫĕршыва планран иртерсе пиншер кубометр йывăҫ парассишĕн, продукцин хăйне ларакан хакне чакарассишĕн кĕрешет.

Я. ЦВЕТКОВ,
Йĕпреҫ вăрманпромхоз директорĕ.

График тăрăх ĕҫлеҫҫĕ

Комсомольски районĕнчи «Гигант» колхоз членĕсем уйăхлăха активлă хутшăнчĕҫ. Вăрманта 30 ҫын ҫуран, 20 ҫын лавпа ĕҫлет. Бригадăсене парторганизаци секретарĕ А. Львов юлташ ертсе пырать. Вăл ĕҫе талăкри график тăрăх туса пырать. Бригадир кашни ҫынна куллен ĕҫлемелли задани парать. Ҫапла туни ĕҫ тухăҫлăхне чылай хăпартрĕ. Бригадăра кулленхи задание иртерсе тултарассишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ.

Вăрманта комсомолецсемпе ҫамрăксен бригади ĕҫлет. Унта 10 комсомолец тата ҫавăн чухлех союзра тăман ҫамрăк. Вĕсене комсомол организацийĕн секретарĕ П. Воробьев юлташ ертсе пырать. Йывăҫ турттаракан комсомолецсем Н. Степанов, Г. Константинов, А. Голубев, И. Скворцов юлташсем куллен ĕҫ нормине 120—150 процент тултараҫҫĕ. Вĕсем 10—12 километртан 3—4-шар кубометр йывăҫ турттараҫҫĕ.

С. СИДОРОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Шкулсенчи парторганизацисен ĕçне вăйлатни кирлĕ

Шкулти пуçламăш парторганизацин, предприятири е колхозри парторганизацине танлаштарсан, урăхларах условисенче ĕçлеме тивет. Калăпăр, колхозри парторганизаци, ВКП(б) Уставĕ панă правăпа усă курса, артель правленийĕн пĕтĕм ĕçне тĕрĕслесе тăма пултарать пулсан, шкулти парторганизацин çавăн пек право çук.

Анчах тĕрĕслев прави çукки шкул дирекцийĕн ĕçĕсене пачах хутшăнма юраманнине пĕлтермест. Парти Уставĕ хушнă тăрăх, учреждснисенчи пуçламăш парторганизацисем (вĕсен шутне шкулти организаци те кĕрет) учреждени ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен ертсĕ пыракан органсене пĕлтерме, уйрăм работниксен çитменлĕхĕсене палăртма тата вĕсем çинчен учреждени руководителĕсене пĕлтерме тивĕç. Çак йĕркене тĕплĕ пĕлмен пирки шкулсенчи хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем хăйсен ĕçне тĕрĕс туса пымаççĕ: шкул дирекцийĕн ĕçне тӳрех хутшăнаççĕ.

Шкулсенчи парторганизацисен тĕп задачи вăл—кадрсене идейăллă-политикăллă воспитани парасси, вĕсене вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатнăçемĕн лайăхлатса пыма пулăшасси. Вĕрентекенсем хушшинче большевикла критикăпа самокритикăна та куллен вăйлатса пыни кирлĕ.

Уйрăм коммунистсем асăрхаттарса калаписене шута илсе, парти райкомĕ Вăрнарти ялхуçалăх шкулĕн ĕçĕпе тĕплĕ паллашрĕ. Тĕрĕслени çакна кăтартса пачĕ: уйрăм преподавательсем уроксене хатĕрленмесĕр иртгереççĕ, вĕренӳ пахалăхĕшĕн тăрăшмаççĕ. Ялхуçалăх шкулĕнче пĕр урока та ку чухнехи пурнăçпа тачă çыхăнтармасăр иртгермелле мар ĕнтĕ. Анчах кунта ялхуçалăх новаторĕсен—Социализмлă Ĕç Геройĕсен опычĕсене сармаççĕ. Преподавательсен ĕçри ăсталăхне, квалификацине, идейăллă-политикăллă пĕлĕвне ӳстерме кунта куллен тăрăшмаççĕ. Шкулăн вĕренӳ хуçалăхĕ пур. Вăл вĕренĕве практикăллă ĕçсемпе çыхăнтарма пулăшмалла. Çак хуçалăхра вăрă нимĕнле йĕркс те çук. Шкул хăйĕн хуçалăхĕнчен пухса кĕртекен тырпул тухăçлăхĕ ытла та пĕчĕккĕ.

Мĕнрен килнĕ-ха çав çитменлĕхсем? Преподавательсем хушшинче критикăпа самокритика тивĕçлĕ вырăнта пулман. Çитменлĕхсене çивĕчрех критикăлама хăйнă хăшпĕр юлташсене хĕсме хăтланнă. Пуçламăш парторганизаци шкулти çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çине тăман. Вăл парти Уставĕ хушнă пек туна пулсан, ĕçри кăлтăксене вăхăтра сирсе яма, ертсе пыракан органсенчен тивĕçлĕ пулăшу илме, преподавательсен ответлăхне те, пуçарулăхĕпе пултарулăхне те куллен ӳстерсе пыма пултарнă.

Юлашки вăхăтра райком Вăрнарти вăтам тата Хапăсри çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчи пионер организацийĕсем мĕнле ĕçленине тĕрĕслерĕ. Хапăсри шкулăн пĕрремĕш çур çулти ĕçĕсем питĕ çителĕксĕр: мĕнпур вĕренекенсенчен 29 проценчĕ ĕлкĕрсе пыраймасть. Учительсенчен чылайăшĕ уроксене начар иртгереççĕ, наглядлăй пособисемпе усă курмаççĕ, вĕренекенсемпе опытсем иртгермеççĕ. Шкул директорĕ П. Волков юлташпа вĕренӳ пайĕн заведующийĕ Н. Сидоров юлташ преподавательсенчен сахал ыйтаççĕ, вĕсен ответлăхне ӳстермеççĕ.

Шкулти комсомол тата пионер организацийĕсем вĕренӳ пахалăхне ӳстерес, дисциплинăна çирĕплетес тĕлĕшпе хăйсен пултарулăхне палăртмаççĕ. Нумай учительсем пионер отрячĕсен ĕçĕпе сахал интересленеççĕ, отрядсен ĕçне çĕнетсе лайăхлатма пулăшмаççĕ.

Шкулта воспитанипе вĕрентӳ ĕçĕ çителĕксĕр пулса пынин тĕп сăлтавĕ—преподавательсем хăйсен ăсталăхне, идейăллă-политикăллă пĕлĕвне ӳстерессишĕн кирлĕ пек тăрăшманни пулать. Чылай преподавательсем марксистла-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕренме кăмăл тунă. Анчах вĕсем куллен вĕренмеççĕ, вĕренӳ планне пурнăçласа пымаççĕ.

Вăрнарти тата Кĕçĕн Кипекри вăтам шкулсенчи пуçламăш парторганизацисем комсомол тата пионер организацийĕсен ĕçне тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Кĕçĕн Кипекри шкулта та, Хапăсри пекех, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ пысăк—30 процента яхăн. Кӳстемерти çичĕ çул вĕренмелли шкулти парторганизаци пионер отрячĕсене пултаруллă вожатăйсем парса çирĕплетмен.

Асăннă фактсем акă мĕн çинчен калаççĕ: ВЛКСМ райкомĕ шкулсенчи комсомол тата пионер организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пырать. ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕн VII-мĕш пленумĕ йышăннă решенисене начар пурнăçласа пырать. Шкулсенчи пуçламăш парторганизацисем те комсомол тата пионер организацийĕсен ĕçĕсемпе сахал интересленеççĕ.

Юлашки вăхăтра ВКП(б) райкомĕн бюровĕ шкулсен, шкулсенчи парторганизацисен ĕçĕсене тĕпчесе вĕренме, шкулти кадрсен идейăллă-политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ытларах тăрăшма пуçларĕ. Паллах, ВКП(б) райкомĕ ĕçсем мĕнле пулса пынине тĕрĕсленипех чарăнса тăма пултараймасть. Райком бюровĕ шкулсенчи парторганизацисене çитменлĕхсене мĕнле майпа пĕтермеллине кăтартса парать, вĕсене ĕçре пулăшса пырать.

Вăрнарти зооветтехникумри преподавательсем пурте тенĕ пекех аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă. Хăшпĕр юлташсем малалла вĕренме кирлех те мар, тенĕ пулас. Çавăн пирки‚ ентĕ уйрăм юлташсем хальхи вăхăтри техникăпа наукăри çĕнĕ открытисен, обществăллă-политикăллă пурнăçри нумай ыйтусен пĕлтерĕшне тарăнăн ăнланса илмен е пачах пĕлмеççĕ. Чылай преподавательсем хăйсене ĕçре питех те кирлĕ журналсемпе çĕнĕ кĕнекесене кăна мар, хаçат та çырăнса илмен.

ВКП(б) райкомĕн бюровĕ шкулсенчи парторганизацисене ку пысăк çитменлĕхе пĕтерме хушрĕ. Хальхи вăхăтра районти учительсемпе преподавательсем хушшинче хаçат-журнал çырăнса илмен юлташсем çук. Парти райкомĕ интеллигенцие наукăпа техника, литературăпа искусство фронтĕнче пулса пыракан паллă ĕçсемпе сийĕнчех паллаштарма тăрăшать.

Шкулти кадрсен марксистла-ленинла вĕренĕвĕ лайăхланать. Нумай учительсемпе преподавательсем большевизм теорийĕпе историне тимлĕрех вĕренме пуçларĕç. Райком работникĕсем харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен уйрăм юлташсемпе тĕл пулса калаçаççĕ, кирлĕ чухне консультацисем парса, лекцисем иртгерсе пулăшаççĕ.

Ялти интеллигенцин пысăкрах пайĕ обществăллă-политикăллă ĕçе активлă хутшăнать. Вĕсем колхозниксем валли тĕрлĕ ыйтусем тăрăх докладсемпе лекцисем туса параççĕ. Çакă вара ялти учительсене вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе тачăрах çыхăнма, çавна май çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçе шкулта кăна мар, килте те лайăхрах йĕркелеме пулăшать.

Парти райкомĕ кăтартнă тăрăх, шкулсенчи парторганизацисем учительсене пионер организацийĕсемпе тачăрах çыхăнса ĕçлеме хăнăхтараççĕ. Пионерсен сборĕсене, вĕсен наукăпа техника кружокĕсене учительсем енчен пулăшасси вăйланать. Нумай пуçламăш парторганизацисем производствăллă канашлусем иртгерес, кадрсен квалификацине ӳстерес, опытлă учительсен ĕçĕпе çамрăксене паллаштарас тĕлĕшпе хăйсен пуçарулăхне ытларах палăртма пуçларĕç.

Шкулсенчи пуçламăш парторганизаци секретарĕсене вĕрентессине лайăхлатмалла. Вĕсемпе уйрăм семинар иртгерни пысăк усă кӳнине хамăр ĕçре куртăмăр. Парти райкомĕпе шкулсенчи парторганизацисем хушшинчи çыхăну çирĕпленет. Парторганизаци секретарĕсене шкул пурнăçĕн тĕп ыйтăвĕсене тĕрĕс татса пама вĕрентни шкулсенче партиллĕ ĕçе çĕклеме пулăшĕ.

[illegible]ЕКСАНДРОВ,
ВКП(б) Вăрнар [illegible]н секретарĕ.

Парти вĕренĕвне куллен ертсе пымалла

ЕТĔРНЕ. 1951—52 вĕренӳ çулĕнче районти кадрсен марксистла-ленинла вĕренĕвĕ чылай лайăхланчĕ. Пурĕ 83 кружокпа политшкул ĕçлет. Хулари актив партин касхи шкулĕнче вĕренет. «Большевик», «Ленинский завет» колхозсенчи пуçламăш парторганизацисенче занятисем йĕркеллĕ иртеççĕ. Пропагандистсем занятисене тĕплĕн хатĕрленсе пыраççĕ.

Çав вăхăтрах парти вĕренĕвне чылай çĕрте кирлĕ пек йĕркелемен. «Парижская Коммуна», «1-ое Мая», «Красноармеец», Калинин ячĕпе тăракан колхозсенчи кружоксемпе политшкулсенче занятисем сахал пулнă.

Чылай кружоксемпе политшкулсенче занятисем начар иртеççĕ. Уполминзагри пуçламăш парторганизацинчи пропагандист Александров юлташ занятисене начар хатĕрленсе пырать. Занятисене конспектсăр, наглядлăй пособисемпе усă курмасăр иртгерет. Вĕренӳ пахалăхĕ таунăн идейăллă шайĕ ку чухнехи ыйтусене тивĕçтермеççĕ. Вĕренекенсем пĕри те конспектсем çырмаççĕ.

Харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсемпе ĕçлес енĕпе те парторганизацисенче пысăк çитменлĕхсем пур. «Родина», Ильич ячĕпе тăракан колхозсенчи, райсовет исполкомĕн ялхуçалăх пайĕнчи, райпотребсоюзри пуçламăш парторганизацисенчи харпăр хăй тĕллĕн вĕренекен коммунистсем халĕ те ĕçе тытăнман.

Чылай консультантсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. «Парижская Коммуна» колхозри пуçламăш парторганизацинчи консультант Власов юлташ харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсемпе пачах ĕçлемест, коммунистсем мĕнле вĕреннине пĕлмест.

ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кружоксемпе политшкул руководителĕсене сахал пулăшать. Унăн работникĕсем кружоксемпе политшкулсен занятийĕсенче сахал пулаççĕ.

Пропагандăпа агитаци пайĕ пропагандистсемпе тата консультантсемпе сахал ĕçлет. Вĕсене çителĕклĕ таран теориллĕ тата методикăллă пулăшу памасть. Çакна пропагандистсен семинарĕсене сайра хутра иртгерни те, пропагандистсем валли марксистла-ленинла теори ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем питех те сахал организациленни те çирĕплетсе параççĕ.

ВКП(б) райкомĕн лекторсен группи те çителĕклĕ ĕçлет тесе калама çук-ха. Ялсенче лекцисем сахал пулаççĕ. ВКП(б) райкомĕн штатра тăракан пропагандисчĕсене ялсенче сахал курма пулать.

Районти «Большевик» хаçат парторганизацисенче парти вĕренĕвĕ мĕнле пынине çителĕксĕр çутатать. Пропагандистсен çырăвĕсем хаçатра сахал пичетленеççĕ. Консультантсемпе харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен ĕçĕсем çинчен хаçат вĕренӳ çулĕ пуçланнăранпа та çырман.

Н. ЦВЕТКОВ.

Чăваш халăх искусствин çĕнĕ çитĕнĕвĕсемшĕн

Аслă совет çĕршывĕн социализмла культури хăватлăн аталанса пынă май, мĕнпур тăванла халăхсен искусствисемпе пĕрлех, пирĕн чăваш халăхĕн искусстви те ӳссе чечекленчĕ.

Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, ленинла-сталинла наци политикине пурнăçласа, чăваш халăхĕ хуçалăхпа культура строительствинче пысăк çитĕнӳсем турĕ.

Хуçалăхпа культура ӳсĕмĕ искусствăна вăйлăн аталантармалли никĕс пулса тăрать. Халĕ ĕнтĕ пирĕн искусствăн пур тăслĕхĕсем те ӳссе çитĕнчĕç. Республикăра тăватă театр ĕçлет. Чăвашсен государство филармонийĕнче юрăпа ташă ансамблĕ тата симфониллĕ оркестр пĕрлешсе тăраççĕ. Искусство валли çĕнĕ кадрсем вĕрентсе хатĕрлеме пилĕк шкул пур, вĕсен шутĕнче: музыкăпа художество училищисем, Шупашкарти тата Улатăрти музыка шкулĕсем, Шупашкарти художество шкулĕ. Вĕсенче пурĕ 300 çын ытла вĕренет. Чăвашсен государство галерейинче вырăс классикĕсен, хальхи совет художникĕсемпе чăваш художникĕсен пурĕ 2.000 произведенине ытла пухса çитернĕ.

Пирĕн нациллĕ искусствăн талантлă кадрĕсем—артистсем, композиторсем, художниксем йышлăн ӳссе çитĕнчĕç. Авалтан патша тытăмĕн таканлă атти айĕнче таптаннă халăх пултарулăхĕ, халăх талăнчĕсем совет саманинче суркуннехи хунавсем пек ешĕрсе чечекленчĕç. Ĕмĕртен пухăнса пынă халăх юмахĕсемпе юррисен, халăх тĕррисемпе чĕнтĕрĕсен пуянлăхĕ çĕнĕ искусствăна аталантармалли паха çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Хальхи вăхăтра республикăри халăх пултарулăхĕн çурчĕ тавра 600 ытла драмкружок, 450 хор кружокĕ, 200 музыка кружокĕ, 150 ташă коллективĕ пĕтĕçсе тăраççĕ. Çулсерен пулса иртекен халăх пултарулăхĕн смотрĕсене 25 пин çынна яхăн хутшăнаççĕ.

«Совет çыннисем çапла шутлаççĕ,—тесе вĕрентет Сталин юлташ,—кашни наци,—пысăк-и вăл е пĕчĕкçĕ, пуррĕх,—хăйĕн паха уйрăмлăхĕ, хăйĕн специфики пур, ку вăл çав наци тивĕçлĕхĕ çеç пулса тăрать тата вăл ытти нацисен çук. Çав уйрăмлăх вăл кашни наци пĕтĕм тĕнче культурин пуянлăхче хывакан, ăна ӳстерекен, ăна ытларах пуянлатакан парне пулса тăрать».

Пирĕн чăваш халăхĕн нациллĕ искусстви те ĕнтĕ Совет Союзĕнчи нумай нациллĕ социализмла искусствăн пĕр пайĕ пулса тăчĕ. Вăл, пĕтĕм совет искусствипе пĕрле, пĕртен-пĕр тĕрĕс çулпа—социализмла реализм çулĕпе малалла ӳссе, хăватланса пырать.

Совет искусстви, вăл шутра пирĕн чăваш халăх искусстви те, партин Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем тĕлĕшпе йышăннă постановленисем хыççăн уйрăмах паха утăмсем турĕ.

Юлашки пилĕк çул хушшинче республикăри театрсен репертуарĕнче совет драматургĕсем çырнă произведенисем тĕп вырăн йышăнса тăракан пулчĕç. Сăмахран, пирĕн театрсем 1951 çулта кăтартнă 58 пьесăран 27 пьеса хальхи вăхăтри темăпа çырнă произведенисем пулчĕç.

Филармони коллективĕсем те—чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ тата симфониллĕ оркестр—хăйсен репертуарне вырăс классикĕсен, хальхи совет композиторĕсемпе чăваш композиторĕсен произведенийĕсемпе, халăх ташши-юррисемпе пуянлатса пыраççĕ.

Иртнĕ 1951 çулта пирĕн театрсемпе филармони коллективĕсем халăха пурĕ 2.500 ытла спектакльсемпе концертсем кăтартса пачĕç, çав концертсемпе спектакльсенче çур миллион çынна яхăн пулнă.

Совет правительстви «Театрсене паракан государство дотацине пĕчĕклетесси тата театрсен финанс ĕçне лайăхлатасси çинчен» йышăннă постановление пурнăçласа, театрсемпе филармони коллективĕсем хăйсен производствăллă ĕçне чылай лайăхлатрĕç.

Партин историллĕ решенийĕсем хыççăн пирĕн композиторсемпе художниксем çĕнĕ произведенисем чылай çырчĕç.

Нумаях пулмасть Шупашкар хулинчи общественность Ленинград композиторĕ Ж. Пустыльник çырнă «Нарспи» оперăна кăмăлласа йышăнчĕ. Хăна пирĕн творчествăллă коллективсем Октябрьти Социализмлă Аслă революци пулнăранпа 35 çул тултарнă тĕле сцена çинче лартса пама хатĕрленеççĕ. Çапла ĕнтĕ В. Кривоносовăн «Хаваслăх», Орлов-Шуçăмăн «Çĕмĕрт çеçки çуралсан» ятлă музыкăллă комедийĕсене шута илсен, эпир хамăрăн музыкăра пысăк формăллă произведенисем, малтанхи опера çуралнине куратпăр.

Чăваш композиторĕсем чылай паха произведенисем пачĕç, вĕсен шутĕнче В. Ходяшев аслă Сталин çинчен çырнă кантата, Г. Хирбюн—«Сталин çинчен хунă юрă», «Мир юрри», «Ĕç юрри», Ф. Лукинăн—«Мускав çинчен хунă юрă», «Эпир миршĕн», «Тăван хула», «Çуралнă çĕршыв», «Колхоз хĕрĕсен юрри», Г. Лебедевăн — «Колхозниксен хорĕ», «Çамрăксен хорĕ» «Çул хыççăн çул», А. Токаревăн—виолончель валли çырнă романс тата ыт.

Чăваш художникĕсем иртнĕ çул хăйсен ĕçĕсене кăтартас тĕлĕшпе виçĕ выставка туса иртгерчĕç. Выставкăсене курма пыракансем В. Овчинниковăн—«Чăваш республикине тăвасси çинчен калакан декрета алă пусни», М. Спиридоновăн — «Вăйлă тырпул», «Манăн тăван çĕршыв», В. Макаровăн «В. И. Ленин малтанхи ссылкăра», «Разведчиксем», «Чăваш халăх поэчĕн С. В. Эльгерăн портречĕ», П. Григорьевăн—«Политикăллă вĕренӳре», А. Спиридоновăн «Атăл», В. Гурьевăн—«Кĕрхи Атăл» картинисене, И. Кудрявцев гипсран тунă «В. И. Чапаев» скульптурине, Н. Сверчковăн «Вăрман юрлать» ятлă пейзажĕсене, Е. Бургуловăн театрти спектакльсем валли хатĕрленĕ эскизĕсене уйрăмах кăмăлласа йышăнчĕç.

Пирĕн искусство работникĕсен—драматургсемпе артистсен, композиторсемпе художниксен ĕçĕнче ăсталăх ӳсни, вĕсем партипе халăх ыйтнине çивĕчрех туйса тăни сисĕнет.

Анчах çапах та пирĕн ĕçре халĕ пысăк йăнăшсемпе çитменлĕхсем пур-ха.

Пĕтĕçтерсе каласан, чи пысăк çитменлĕх вăл—искусство произведенийĕсене идейăпа художество тĕлĕшĕнчен тĕплĕн пултарса çитерейменни. Драматургсем, композиторсем, художниксем час-часах хальхи пурнăçри паха темăсене суйласа илеççĕ, анчах çав темăсем чылай чух произведенисенче сĕткенсĕр, шупка пулса тухаççĕ. Вара чип-чипер ырă шухăшах хавшаса, халсăрланса юлать.

Чăн-чăн искусство тума пысăк ăсталăх кирлĕ. Ăсталăхсăр искусство çук, пулма та пултараймасть. Анчах художествăллă ăсталăха ӳстерес тĕлĕшпе пирĕн искусство работникĕсенчен чылайăшĕ пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ăсталăх, мастерлăх çителĕксĕрри вара идейăна, хальхи çынсен сăнарĕсене пăсса кăтартасси патне илсе çитерет. Содержанипе форма иккĕшĕ таччăн çыхăнса тăнине ăнланса илсе, кашни искусство çынни хăйĕн политикăллă пĕлĕнĕпе художествăллă ăсталăхне куллен ӳстерсе пыма тивĕçлĕ, çак майпа кăна ĕнтĕ искусствăра чăн-чăн паха произведенисем шăратса кăларма пулать.

Тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—пирĕн искусствăра ĕçлекенсем час-часах рабочисемпе колхозниксен, совет интеллигенцийĕн пурнăçĕнчен аякра тăни. Драматургсем, композиторсемпе художниксем фабрикăсемпе заводсене, колхозсене, çĕнĕ стройкăсене питĕ сахал тухса çӳреççĕ, производствăри чаплă новаторсен ĕçĕсемпе сиелтен кăна паллашаççĕ.

Сăмахран, чăваш художникĕсем Октябрьти революци пулнăранпа 34 çул тултарнă тĕле туса иртгернĕ выставкăра чи пысăк вырăн пейзажлă ӳкерчĕксем йышăнчĕç. Çав пейзажсене хăшпĕр художниксем хăйсен хваттерĕсенчен аякка каймасăр е тата чӳречерен пăхса кăна ӳкернĕ. Пире аслă çĕршывăн пуян та илемлĕ çутçанталăкне кăтартса паракан пейзажсем кирлĕ, анчах «кил йĕри-таврашĕнчи» сăнлăхсене кăна ӳкерсе ларни паян никама та çырлахтарма пултараймасть.

Пирĕн художниксен хамăр çĕршывра республикăри социализмла аслă улшăнусене, çав улшăнусене пурнăçа кĕртекен совет çыннисен сăнарĕсене туллин те ĕненмелле, чăн-чăн ăсталăхпа кăтартса пама пĕлес пулать. Çавăнпа та нумай вĕренмелле, пурнăçа активлăнрах хутшăнса пымалла.

Çак сăмахсем вĕсем драматургсемпе композиторсене те пырса тивеççĕ.

Театрсен иртнĕ сезонĕнче репертуартан Максимов-Кошкинскин «Константин Иванов», Трофимовăн «Чакка» пьесисене кăларса пăрахма тиврĕ. Ку пьесăсенче чăваш халăх историйĕн хăшпĕр ыйтăвĕсене пăсса, пăтраштарса кăтартса панă. Ку, паллах ĕнтĕ, чи малтан, асăннă драматургсем политикăллă пĕлӳлĕх тĕлĕшпе аялти пусăмра тăнинчен килнĕ.

Çавăн пекех, вырăссен драма театрĕн иртнĕ сезонти репертуарĕнче ним çинчен каламан янăх пьесăсем («Потерянный дом», «За здоровье молодых», «Не ваше дело») пĕр сăлтавсăрах ытлашши пысăк вырăн йышăнчĕç. Унашкал пьесăсем театрăн халăха воспитани парас вăйне ӳстермеççĕ кăна мар, нумай каялла чакараççĕ. Репертуар суйласа илес тĕлĕшпе театр работникĕсен тимлĕнрех ĕçлес пулать.

Юлашки вăхăтра чăваш драматургĕсем çĕнĕ пьесăсем пачĕç, терĕмĕр. Анчах ку вăл культура тĕлĕшпе совет çыннисен кунтан-кун ӳссе пыракан ыйтăвĕпе танлаштарсан, пачах та çителĕксĕр. Пирĕн рабочисемпе интеллигенци пурнăçĕ çинчен, коммунистсен партийĕн ертсе пыракан ролĕ çинчен çаплах-ха пьесăсем çук.

Чăваш композиторĕсем юлашки вăхăтра хăшпĕр утăмсем турĕç пулсан та, куплетлă юрăсен шайĕнчен питĕ вăрахăн çĕкленсе пыраççĕ. Пысăк формăллă музыка произведенийĕсем çырма вĕсене ăсталăх çителĕксĕрри чăрмантарать. Вĕсем хамăр халăхăн хальхи юррисемпе ташшисене пачах та çителĕксĕр пухса, тĕпчесе, вĕренсе пыраççĕ. Вырăссен аслă композиторĕсем, çавăн пекех чăвашсен музыкăллă культурине пуçарса яракансем Ф. Павловпа В Воробьев музыка ăсталăхне чи малтан халăхран вĕренсе пынă, вĕсем халăх ташши-юррисене яланах кăмăлласа пухнă, юратса вĕреннĕ. Халăх пултарулăхĕн иксĕлми çăлкуçĕ искусствăна яланах вăй парса тăрать. Çав вăйпа усă курма пĕлмелле.

Пирĕн искусствăра профессиллĕ критика япăххи—творчество работникĕсене ӳсме чăрмантаракан сăлтавсенчен пĕри. Ертсе пыракан партиллĕ критикăсăр искусство ĕçне малалла яма çук.

Профессиллĕ искусство критики, пирĕн творчество организацийĕсенчи критикăпа самокритика искусствăна малалла аталантарса пыракан вăй пулса тăма тивĕçлĕ.

Искусство организацийĕсенчи нумай çитменлĕхсемпе йăнăшсем, паллах, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен Управленийĕ япăх ĕçленинчен те килет. Управлени халлĕхе хăйĕн учрежденийĕсене ертсе пырас ĕçе тивĕçлĕ виçене çĕклеймен-ха. Çавăн пекех, чăваш композиторĕсемпе художникĕсен союзĕсем те творчество ĕçне кирлĕ пек чĕртсе ярайман.

Пирĕн талантлă вăйсем çителĕклĕ. Искусствăн çĕнĕ кадрĕсем çултан-çул ӳссе пыраççĕ. Çав вăйсене пĕр çĕре тачăн пĕтĕçтерсе, творчество ĕçне куллен хăватлантарса пырсан, эпир аслă коммунизм саманине туллин кăтартса паракан произведенисем шăратса кăларма тивĕçлĕ.

А. ЭСХЕЛЬ.

Халăх тарçи

1. Тивĕçлĕх

Ĕçрен таврăнсанах, Василий Лаврентьевич патне икĕ хĕр кĕрсе тăчĕç. Депутат вĕсене паллать: вĕсем Çĕмĕрле ялĕнчи хĕрсем, Ольгăпа Лиза. Иккĕшĕ те чылай çул хушши комбинатра ĕçлеççĕ.

Вĕсем пысăк хуйхăпа килнине Василий Лаврентьевич куçĕсенченех туйса илчĕ. Хĕрсем хăйсен хуйхи çинчен куççулĕ витĕр каласа параççĕ. Çĕрле ăнсăртран вут тухса вĕсен килĕнче пĕтĕм çурт-йĕрĕ çунса кайнă.

— Мĕн тăвас халĕ пирĕн?—ыйтаççĕ Ольгăпа Лиза хăйсен депутатĕнчен.—Кĕр çывхарса килет. Кунта пирĕн хваттер çук, килте ун пек килсе тухрĕ...

Депутат пĕр самант шухăша кайса ларчĕ.

— Хăвăрăн мĕнле шухăш пурччĕ сирĕн?—ыйтрĕ вăл хĕрсенчен.

— Эпир комбинат дирекцийĕ пулăшмĕ-ши, тетпĕр-çке...

— Юрать, калаçса пăхăп эпĕ. Ман шухăшпа, пулăшма пултарать,—лăплантарать хĕрсене Василий Лаврентьевич.

Депутат каланă пекех пулса тухрĕ. Министерство ирĕк панипе, Ольгăпа Лиза Хумаровăсене комбинат дирекцийĕ çурт тумалăх йывăç пачĕ, кирлĕ таран ăна çурсах хатĕрлерĕ. Дирекципе профсоюз завкомĕ спен курнă работницăсене укçан та пулăшу пачĕç.

Мĕнле ыйтупа килмеççĕ пулĕ суйлавçăсем хăйсен депутачĕ патне. Кашни кун пĕр икĕ çын ыйтупа килмесĕр иртмест.

Эпир пынă чухне ун патĕнче пĕр ватă хĕрарăм ларать. Василий Лаврентьевич тин кăна ĕçрен таврăннă та, ĕç сĕтелли умне ларнă. Сĕтел çинче хутсем, кăранташ. Васкасарах калаçакан хĕрарăм сăмахне итленĕ май, депутат хăйĕн тетрачĕ çине хушăн-хушăн темĕн паллă тăвать.

Матрена Никифоровна Никифорова, пĕччен хĕрарăм, 20 çул хушши сĕтел-пукан комбинатĕнче ĕçленĕ. Хăй вăхăтĕнче вăл стахановка шутланнă. Хисеп хăми çинчен ман сăн анман та,—тет кинемей, иртнĕ вăхăта аса илсе. Производствăра вăл пĕтĕмпе 32 çул ĕçленĕ. Халĕ пенсипе пурăнать. Çĕмĕрлери ВТЭК-ра ăна виççĕмĕш группа панă. Вара вăл Вăрнар районĕнчи ВТЭК-а каять.

— Документсене пăхрĕç те, пĕр сăмахсăрах иккĕмĕш группа пачĕç. Мана, ват çынна, ма çавăн пек çӳретес ĕнтĕ?

— Да-а, вĕсем пирки эп санран кăна илтместĕп-ха,—тет кинемее депутат.—Яланах йĕркеллĕ ĕçлеймеççĕ пулмалла вĕсем. Астутарнăшăн тавтапуç сана... Сире, кинемей, государство пăрахмасть. Вăй пур чухне эсĕ ăна усă кӳтĕн пулсан, вăл халь сан хута кĕрĕ. Инвалидсен çуртне каятăн-и?

Кинемей килĕшет. Депутат ăна тивĕçлĕ хут çырса парать, кинемее райсовет исполкомне çитме хушать. Вăл кирлĕ çыннăн хушаматне те каласах ярать. Кинемей депутата тав тăвать.

Ĕççыннисем, хăйсем килмесĕр пуçне, депутат патне çырусем те чылай çыраççĕ. Кашни кун Василий Лаврентьевич Пастухов ик-виçĕ çыру илет. Килнĕ çырусене вăл уйрăм папка ăшне çĕлесе хурать, номерлесе уйрăм тетрадь çине паллă тăвать. Ку тетрадь çинче шута илнĕ çырусем виççĕртен те иртнĕ ĕнтĕ. Унта депутат çыру авторне, унăн адресне, çырун кĕске содержанине, çырăва ăçта янине, çыру тăрăх мĕн тунине паллă тăвать.

Акă, Мисчĕ разъезĕнче чугун çул çинче ĕçлекен Вера Павловна Карповăна вырăнсăр урăх разъезда куçарнă. Унта куçсан, Карповăн икĕ ачи те вĕренӳрен юлаççĕ. Работница пулăшу ыйтса çыру çырнă. Депутат çырăва илсенех вырăна тухса каять—писе мар. Кĕçех Василий Лаврентьевич тата тепĕр çыру илет. Карпова хăйне пулăшнăшăн депутата тав тăвать: ăна хăй вырăннех лартнă, ирĕксĕр прогул тунăшăн та тӳленĕ.

Çĕмĕрле хĕрĕ Рая Егорова ăнсăртран урине хуçнă. Вырăнти врачсем кунта [illegible] çитерейменççĕ. Р. Егорова хăйĕн депутачĕ патне çырать. Депутат вара Хусанти восстановительнăй хирурги институтне ыйтса ярать. Институтран часах ответ килет: вырăн пур, йышăнма пултараççĕ... Рая Егорова халĕ сывă çын пекех: уксахлани те сисĕнмест.

Депутат обществăллă аплă пурнăçпа пурăнать. Район Совечĕн, хула Совечĕн сессийĕсенче вăл—чĕннĕ хăна. Иртнĕ çул ăна парти кандидатне илчĕç. Халĕ вăл парти активĕн кашни пухăвĕнчех пулать. Çавна май депутат район пурнăçне, ӳсĕмĕпе çитменлĕхне, нушине лайăх пĕлет. Улхашри «Лесоруб» артель иртнĕ çул питĕ начар ĕçлесе пыратчĕ. Халĕ ку артель ӳсех пырать. Район вăрман хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли плана та тултарма пултарать. Депутат ĕç хыççăн Мисчĕ вăрман пунктне тухса каять...

2. Сесси умĕн

Василий Лаврентьевич Пастухов столяр ĕçне те манмасть. Манма мар, тата пысăкрах ответлăхпа туса пырать вăл ăна. Вăл туса хатĕрлекен пĕрремĕш пукан—эталон цеха каять. Ун тăрăх пукан пайĕсене хатĕрлекен столярсем хăйсен станокĕсене вырнаçтараççĕ. Çапла вара пукансем тăвакан столярăн ĕçри ответлăхĕ татах ӳсет.

— Пĕр-пĕр илемсĕр, йĕренкесĕр çĕнĕ çурта курсан, пирĕн совет çынни: хăш архитектор пуçĕ шыраса тупнă-ши кăна, тет. Капла каласа, вăл ку çурта хăй алăне хăпартакан рабочи-каменщик айăплă маррине палăртать,—тет Василий Лаврентьевич.—Ан тив, пукан пĕчĕк япала пултăр та, кӳлепи начар пулсан, совет çынни халĕ рабочие айăпламасть, вăл пĕтĕм коллектива та хур тумасть: вăл çав япала кӳлепине чи малтан туса хатĕрлекене хурлать.

Хăйĕн çак сăмахĕсене столяр-депутат яланах асра тытать. Çавăнпа пукан кӳлепинчи кашни çĕнĕ улшăнăвах столяра шухăша ярать: епле-ши, илем кӳрĕ-ши вăл ĕççынни пӳлĕмне, кăмăлне тивĕçтерĕ-ши? Совет çыннин кăмăлне тивĕçтерес тесех Василий Лаврентьевич цех кăларакан пукан урисене улăштарчĕ. Унччен пуканăн кайри урисем кукăрччĕ, çав хушăрах малти урисем аякран тупса лартнă пек тӳп-тӳрĕччĕ. Халĕ малти урисене те аваççĕ. Пукан хыçне кăштах ансăрлатнă. Кун пек улăштарни пукан кӳлепине тата илемлетет. Февралĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа сĕтел-пукан комбинатĕнчен пукан çак улшăнусемпе тухма тытăнчĕ.

Василий Лаврентьевич çынсем мĕнле ĕçленипе те тăтăш интересленет, вĕсенчен вĕренме тăрăшать. Çапла кăçал вăл Киеври Баженко ячĕпе тăракан фабрикăна кайса килчĕ. Унта кайса килни столяра хăйне кăна мар, цеха та усă пачĕ. Цех пукан кӳлепине çĕнетсе улăштарчĕ, пуканăн кайри урисене каруселлĕ-фрезерлă станокпа туса кăларма тытăнчĕ. Кайри урисене çак станокпа туни кăна цеха çулталăк хушшинче 19 пин тенкĕ укça перекетлесе хăварма май пачĕ.

Çак кунсенче Василий Лаврентьевич Пастухов ĕçлекен 4-мĕш цехра уйрăмах пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Рабочисем хăйсен юлташне, столяр-депутата, СССР Верховнăй Совечĕн 3-мĕш сессине ăсатса яма хатĕрленеççĕ. Январь уйăх планне ăнăçлă тултарнă хыççăн, рабочисем февраль уйăх планне срокчен тултарассишĕн кĕрешме тытăнчĕç. Февралĕн 14-мĕшĕнчен пуçласа цех коллективĕ СССР Верховнăй Совечĕн 3-мĕш сессийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса ĕçлеме тытăнчĕ. Уйрăм мастер сменисем, бригадăсем, столярсем хăйсем çине пысăкрах обязательствăсем илчĕç. Малтанхи кунсенчех ăмăрту вăйланма тытăнчĕ. Малти вырăнта пукан потокĕнче ĕçлекен И. Роткин бригади тăрать. Ку бригада уйрăм кунсенче хăйĕн заданине 150 процент таран пурнăçлать. И. Дмитриев мастерăн смени 110—115 процент таран тултарса ĕçлет. Уйрăм рабочисенчен Я. Кузьмин, В. Семенов фрезеровщиксем кулленхи нормăна 150—200 процент, М. Лоханов, П. Федянин, С. Кашкаров столярсем 250—300 процент тултараççĕ.

Сесси умĕнхи социализмлă ăмăрту юнашар цехра, 5-мĕш цехра та, анлăн саралчĕ. Январь уйăх планне цех 106 процент тултарнă. СССР Верховнăй Совечĕн 3-мĕш сессийĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса ĕçлесе, цех кулленхи задание 7 сехетре, уйрăм работниксем 4—5 сехетре пурнăçлама обязательство илнĕ. Кашни смена задание кĕске срокра пурнăçланипе пĕрлех продукци пахалăхне ӳстерме, продукцин хăйне ларакан хакне кашни операци тăрăх чакарма пулнă. Çапла, сăмахран, П. Холунясов мастер смени кулленхи заданне 7 сехетре пурнăçлама, пĕтĕм продукцие пĕрремĕш сортпа кăларма обязательство илнĕ. Н. Павлов мастер смени пĕрремĕш сортлă продукци январь уйăхĕнчинчен 5 процент ытларах кăларассишĕн, уйăхра 5 пин тенкĕ перекетлесе хăварассишĕн кĕрешет.

Рабочисем хăйсен сăмахне çирĕп тытаççĕ. Вĕсем хăйсен нормисене обязательствăра илнĕ срокран та иртгерсе тултараççĕ. А. Тельнов, Н. Старостин столярсем, В. Проняшин упаковщик хăйсен нормисене 4 сехетре, Е. Крылова маляр, М. Балина станочница, С. Чимров столяр 5—6 сехетре тултарса ĕçлеççĕ.

— Хамăр депутатăн пирĕн пирки Мускавра вăтанмалла ан пултăр,—теççĕ комбинатри столярсем.

Е. АФАНАСЬЕВ.
(Хамăр корр.).

Çĕмĕрле хули.

Колхоз председателĕсен республикăри канашлăвĕ

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне чылай ӳстеретпĕр

А. ЯБЛОНСКИЙ,
Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз председателĕ.

Пирĕн пĕрлешсе пысăкланнă колхозра 700 хуçалăх, 2.336 çын. Артеле 5.744 гектар обществăллă çĕр çирĕплетсе панă, вăл шутра акмалли çĕр 3.309 гектар шутланать.

Пирĕн колхозăн хуçалăхĕн нумай отраслĕсем аталанаççĕ, чылай ĕççене механизациленĕ. Пирĕн 52 гектар çинче сад тата пысăк лаптăк йышăнакан обществăллă пахча пур.

Пирĕн артельре обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те ăнăх мар аталаннă. Пирĕн çичĕ ферма пур, вĕсенче 547 пуç ĕне выльăх, 440 сысна, 900 сурăх, виçĕ пин пуç кайăк-кĕшĕк, 15 хура тилĕ, 50 кролик шутланать. Колхоз 1951 çулта выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене сутса 348 пин тенкĕ тупăш илчĕ. Çакă вăл мĕнпур укçа-тенкĕ тупăшĕнчен 35 процент чухлĕ пулать. Ферма работникĕсем ĕне ферминчен пысăкрах тупăш илчĕç. 1951 çулта вăтам шутпа кашни ĕнерен 1.647 литр, ăратлă ĕнесенчен кашниннчен—2.170 литр сĕт суса илнĕ. Храмова доярка хăйне çирĕплетсе панă вунă ĕнерен кашниничен вăтам шутпа 2.142 литр сĕт суса илнĕ. Пирĕн фермăри чи лайăх ĕнесем çулталăкра 3.200-шер литр тата ытларах та сĕт парӑççĕ. Халĕ дояркăсем ăратлă ĕнесенчен вăтам шутпа кашниннчен талăкра 20 литртан пуçласа 27 литр таран сĕт суса илеççĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене яланах срокчен пурнăçласа пырать. Эпир ку таранччен государствăна кăçалхи çулшăн вунă пин литр ытла сĕт патăмăр, июлĕн 1-мĕшĕччен 90 пин литр сĕт парса государствăна памалли плана тултаратпăр. 80 пуç выльăха самăртма хупрăмăр.

Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес ĕçре апат пысăк вырăн йышăннипе пуртте пĕлеççĕ. Вăтам шутпа эпир халĕ кашни ĕнене 1,5 килограмм тĕштырă, сакăр килограмм утă, 8—10 килограмм пăспа çемçетнĕ улăм, 15—25 килограмм сĕтеклĕ апат паратпăр. Ăратлă, сĕт нумайрах паракан ĕнесене концентратлă апатсемпе сĕтеклĕ апатсем нумайрах паратпăр. Ĕнесене пӳлĕмри температура таран ăшăннă шыв ĕçтеретпĕр.

Çуллахи вăхăтра эпир выльăх-чĕрлĕхе талăкĕпех кĕтӳре çӳрететпĕр, кĕтӳ çӳрекен вырăнсене уйрăм участоксене пайласа, черетпе çитеретпĕр. Ĕнесенчен сĕт нумай суса илес тесен, вĕсене хĕллехи вăхăтра та лайăх пăхас пулать. Выльăх-чĕрлĕх хĕлле высăллă-тутăллă пурăнсан, вăл çулла та сĕт нумай памасть. Хăшпĕр колхозсем ĕнесем хĕсĕр юлнă пирки нумай сиен кураççĕ. Пирĕн колхозра ĕнесем хĕсĕр юлмаççĕ.

Пирĕн çĕршыври выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракансен—«Караваево» совхозри работниксен примĕрĕпе, эпир пăрусене вутă хутса ăшăтман пӳлĕмсенче çитĕнтеретпĕр, пăрусем вилни пулман.

Колхоз правленийĕ выльăх-чĕрлĕх пăхса усракансен ĕçне çăмăллатма тăрăшать. Утă-улăма тата сĕтеклĕ апатсене машинăсемпе вĕтетеççĕ. Артезиан çăлне туса пĕтернĕпе пĕрех, фермăсене шыв илсе пырас ĕç те çăмăлланать. Çывăх вăхăтра эпир фермăсене водопровод кĕртме, автопоилкăсем лартма, электричествăпа ĕне сумалли агрегат туянма, витесене выльăх апачĕ илсе пыма çакса тунă çул тума палăртнă.

Сталин юлташ патне янă çыру çинче алă пусса, ĕне ферминче ĕçлекенсем кăçал кашни ĕнерен 2.500-шер литр сĕт суса илме обязательство илчĕç. М. Маркина, А. Храмова, П. Тюткина доярккăсем кашни ĕнерен виççĕр пин литр сĕт суса илме сăмах пачĕç.

Пирĕн колхозниксем Мордва республикинчи Ардатов районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пире социализмлă ăмăртса ĕçлеме чĕннине йышăнаççĕ, çав ăмăртура мала тухассишĕн тăрăшаççĕ.

Фермăсем валли çурт-йĕр тăвас пирки

СЕНТЕРВĂРРИ. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышне районти колхозсем юлашки çулсенче чылай ӳстерчĕç. Выльăх-чĕрлĕх шучĕ ӳснĕ май, витесем ытларах кирлĕ пуласси паламасăрах паллă. Çавна шута илсе, хăшпĕр колхозсем ку енĕпе тăрăшса ĕçлеççĕ.

«Молния» колхозра иртнĕ çул 200 сысна, 270 сурăх вырнаçмалăх çĕнĕ витесем тунă, кормозапарник тунă. «Верный путь» ялхуçалăх артелĕ лаша, сысна тата чăх-чĕп витисем тунă. Асăннă колхозсенче выльăхсене пăхса усрасси лайăхланса пырать.

Анчах, калас пулать, 1951 çулта колхозсенчи строительство енĕпе район плана пĕр кăтартупа та тултараймарĕ. Лаша витисем тĕлĕшпе плана 71,8 процент, сурăх витисем тĕлĕшпе—64 процент кăна тултарнă. Сталин ячĕпе, Буденный ячĕпе, Упакасси ялĕнчи Ленин ячĕпе, Чапаев ячĕпе тăракан колхозсенче витесем пачах çителĕксĕр, пур пеккисем те кивелнĕ. Асăннă колхозсем юлашки 2—3 çулта обществăллă пĕр çурт-йĕр те туман. Витесем çителĕксĕр пирки хĕлле фермăсенче çухатусем пулаççĕ.

Районти колхозсен кăçал выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк валли çĕнĕ витесем аллăна яхăн тумалла, киввисене нумай юсамалла. Çак задание пурнăçа ăнăçлă кĕртесси пĕтĕмпех колхозсем уйрăлми фондри укçа-тенкĕпе тата государство кивçен паракан укçапа пĕлсе усă курниннчен, хĕллехи вăхăтра кирлĕ таран йывăç хатĕрлесе хунинчен килет. Уйрăм колхозсем йывăç касма тата турттарма, хăма çурттарма тытăннă та ĕнтĕ. Ку ĕçе, сăмахран, «Молния», Молотов ячĕпе тăракан, «Светлый путь», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче аван йĕркеленĕ. Çав колхозсенчи строительство бригадисен ĕçне тĕрĕс организациленĕ.

Анчах ытти нумай колхозсем пирки çавна калама çук-ха. Упакассинчи Ленин ячĕпе тăракан артельте кăçал сысна вити, кайăк-кĕшĕк çурчĕ лартмалла. Вĕсене тума 330 кубометр йывăç кирлĕ. Кунта вара халĕ пĕр кубометр та касса хатĕрлемен-ха. «Сĕнтĕрпуç», Буденный ячĕлле, Чапаев ячĕпе тăракан тата «Красная звезда» колхозсенче те строительствăна тытăнма хатĕрленмеççĕ.

Хăйсем валли йывăç хатĕрлемелли пĕтĕм колхозсем, районĕпе илсен, çирĕм процент та тултарайман. Райсовет исполкомĕн ялсемпе колхозсенчи строительстви пайĕ çак ĕçе тивĕçлипе ертсе пымасть.

Колхозсенче вырăнти строительство материалĕсем тумалли предприятисем организацилессине те манмалла мар. Пĕлтĕр «Родина», «Правда» тата Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем ку тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Вĕсем кирпĕч тума тытăнчĕç. Çак кирлĕ ĕçе кăçал анлăрах сармалла. Районти кашни колхозрах кирпĕч производстви организацилеме май пур.

Хăшпĕр колхозсенче строительство бригадисем тăвасшăн мар. Паллă ĕнтĕ, вĕсене тумасăр строительствăна вăйлатса пыма май килмест. Райсовет исполкомĕн ку тĕлĕшпе колхозсенче çирĕп йĕрке тумалла.

Н. ТИГОВ.

Хурт-хăмăр ăстаçисен курсĕ

Ишлей районĕнчи ялхуçалăх пайĕ хурт-хăмăр ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсен курсне иртерчĕ. Курсран колхозсенчи утар заведующийĕсем пĕтĕмпе 9 çын вĕренсе тухрĕç.

Вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлеме тăрăшаççĕ

Д. КИРПИЧЕВ,
ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн секретарĕ

Пирĕн районти колхозсем кăçал, иртнĕ çулхисемпе танлаштарсан, çуракине чылай лайăхрах хатĕрленеççĕ. Вĕсем пурте кирлĕ чухлĕ вăрлăх хатĕрлерĕç, халĕ вăрлăхсене сортласа тасатаççĕ. Тырпул тухăçлăхне ӳстерес ĕçре вырăнти удобренисем пысăк вырăн йышăнаççĕ. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ, ялхуçалăх специалисчĕсене активлă хутшăнтарса, вырăнти удобренисем хатĕрлеме тата вĕсене уй-хире кăларма пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнчех план туса хатĕрлерĕç. Çавна тунă чухне эпир уй-хир бригадисен бригадирĕсем тата колхозниксем вырăнти удобренисем ытларах хатĕрлеме тăрăшчăр тесе, вĕсен ĕçне тĕрĕс йĕркелесси тата ĕçшĕн тĕрĕс тӳлесси çине уйрăмах тимлĕ пăхрăмăр.

Çавăн пек ĕçсем туса иртерни ăнăçлă пулчĕ. Колхозсем пĕлтĕр уй-хире тислĕк çеç кăларнă пулсан, кăçал вара ытти вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те ытларах ĕçleме пуçларĕç. Сăмахран, 29 колхозран 22-шĕ торф хатĕрлеме тытăнчĕç. Колхоз хирĕсене халĕ 12 пин тонна торф кăларнă. Ку ĕç малалла та хăвăрт пулса пырать.

Колхозсем кăçал минераллă удобренисем те ытларах кӳрсе килеççĕ.

Районти колхозниксем çакна лайăх ăнланаççĕ: вырăнти удобренисемпе анлă усă курни, агротехникăллă ытти ĕçсене пурнăçлани ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кăларса тăратнă задачăна—кашни гектартан 18 центнертан кая мар тĕштырă туса илессине хăвăртрах пурнăçлама пулăшать.

Пирĕн районти тата пирĕнпе кӳршĕри районсенчи колхозсем минераллă удобренисене Çĕрпӳ станцинче туянаççĕ. Анчах та кунта вĕсене лайăх сыхласа усрама кирлĕ условисем çук, çавăнпа та вĕсем пăсăлма пултараççĕ. Çĕрпӳ станцинче минераллă удобренисене тĕрĕс сыхласа усрассине йĕркелесе çитерме вăхăт ĕнтĕ.

Эксплуататорла строя витĕмлĕ питлекен писатель

(Н. В. Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитнĕ тĕле)

Мартăн 4-мĕшĕнче вырăссен аслă писателĕ-патриочĕ, сăмахăн генилле художникĕ—Николай Васильевич Гоголь вилнĕренпе 100 çул çитет. Унăн творчестви вырăс тата пĕтĕм тĕнче культурин историйĕнче палăрмалла пысăк вырăн йышăнать. Пушкинпа пĕрле Гоголь вырăс литературинче критикăллă юхăма пуçарса янă.

В. И. Ленин Гоголь ятне Белинский ячĕпе юнашар лартнă. И. В. Сталин юлташ Гоголе «вырăссен аслă писателĕ» тенĕ.

Гоголĕн литература творчестви XIX-мĕш ĕмĕрĕн 30—40-мĕш çулĕсем тĕлĕнче чечекленнĕ. Российăра феодалла-крепостничество стройĕ вăл вăхăтра йывăр кризис тӳснĕ, çĕршывра буржуалла-капитализмла отношенисем ӳснине пула вăл ишĕлсе пынă. Вырăс халăхĕ крепостниксен пусмăрĕ айĕнче йывăр асап курнă.

Декабристсен восстанине тин çеç престол çине ларнă 1-мĕш Николай патша пĕр хĕрхенмесĕр пусарнă хыççăн политикăлла реакци çивĕчленнĕ. Халăх куракан хĕн-хур йывăрланнă, ирĕклĕ шухăш кăштах палăрнине те, вăл шутра литературăра та тата хытăрах хĕсĕрлеме тытăннă. Патша самодержавийĕ вырăссен аслă поэчĕсене Пушкинпа Лермонтова пĕтерсе лартнă.

Анчах та патша йĕрки халăх чуннне, 1812 çулта Наполеонăн пысăк çарĕсемпе кĕрешсе хăйĕн никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварма пултарнă халăхăн чуннне, чуралантарма пултарайман. Ирĕклĕхшĕн пыракан юхăм идейисем, анлă массăсси крепостничествăна хирĕçле шухăш-кăмăлне палăртакан идейăсем вырăссен обществăллă пурнăçне таранрах та таранрах кĕрсе пынă. Прогрессивлă обществăллă юхăма вăл вăхăтра реализм çулĕпе аталанакан вырăс литератури хавхалантарса пынă.

Ирĕклĕхшĕн пыракан юхăм идейисен ялавĕ айне Пушкин, Лермонтов, Герцен, Белинский хăюллăн тăнă. Вĕсемпе юнашар Николай Васильевич Гоголь—социальнăй пурнăçа тарăн çутатакан, реализмла произведенисен авторĕ пулнă.

«...Гоголь Российăшăн паха пулнă пек, хăйĕн халăхĕшĕн паха пулса тăракан писатель тĕнчере чылайранпа пулманччĕ ĕнтĕ»,—тесе çырнă вырăссен революционерĕ-демократĕ Чернышевский.

Гоголь хăйĕн художествăллă образсен чаплă галлерейинче вăл вăхăтри вырăс обществин пур енĕсене те тенĕ пекех сăнласа кăтартнă. Аслă писатель феодалла-крепостничество стройĕ çĕрнине, помещиксен класĕпе чиновничество ăс-тăнпа мораль тĕлĕшĕнчен пăсăлнине, арканнине, пурнăçа пĕр хĕсĕр иртернине çырса кăтартнă. [illegible] халăхĕнчи пĕтĕм пурнăçа тишкерсе ăнлантарнă, унăн хирĕçĕвĕсемпе кăлтăкĕсене хăюллăн уçса кăтартакан реалист пулнине вăл «Миргородра» кăтартса панă. Вăл помещиксен ирсĕр пурнăç йăлисене, çынна обывателле кирлĕ-кирлĕ мар вак-тĕвексен хăрушă шурлăхне туртса кĕртекен йăласене питленĕ. Писатель вулакана малтан çавăн çинчен култарнă, кайран вара хăй йĕри-тавра салхуллăн çаврăнтарса пăхтарнă, урăх пурнăçпа—этем пурнăçĕпе пурăнма кирлине тавçăрттарса илтернĕ. Белинский çакна палăртнă: Гоголь повеçĕсене вуланă чухне малтанах кулăшла туйăнать, кайран салху пулать.

Хăй çырса кăтартнă помещиксем хушшинчи ирсĕрлĕхе хирĕç Гоголь Украинăра ĕлĕк пулса иртнĕ геройла ĕçсене, халăх хушшинчи вăйлă та хăюллă çынсен сăнарĕсене тăратнă. «Тарас Бульба» ятлă историллĕ повеçре Украина халăхĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн пăнсен Польшăпе кĕрешнине кăтартса панă. Писатель Украина историне Россия историйĕпе тачă çыхăнтарнă. Повеçре вырăс халăхĕшĕн мухтанса мăнкăмăлланни палăрса тăрать. «Çут тĕнчере вырăс вăйне парăнтарма пултаракан вутпа асаплăх тата вăй пур-и вара!»—тет хавхаланулăн Гоголь. Тарас Бульба вырăс çыннисем çинчен каланă чухне çулăмлă патриотăн хавхаланулă сăмахĕсене калать. «Ытти çĕрсенче те юлташсем пулнă, анчах вырăс çĕрĕнчи пек юлташсем пулман... Çук, тăвансем, вырăс чунĕ юратнă пек юратма, ăспа е мĕнпе те пулин урăххипе мар, турă панипе мĕн пурĕпе, хăвăн ăшăнта пуррипе мĕн пурĕпе юратма... çук, çавăн пек юратма никам та пултараймасть».

Петербург çинчен çырнă повеçсенче («Невский проспект», «Портрет») тата ытти произведенисенче те пурнăçра ыррине, малта пыракане тарăнăн кăмăллани палăрать. Пушкинăн «Станционнăй смотрительри» традицине малалла аталантарса, аслă писатель хăйĕн чылай произведенийĕсенче крепостничествăлла Российăри простой çынсен йывăр пурнăçĕ çинчен калакан темăна илнĕ.

1835 çулта Гоголь хăйĕн «Ревизор» ятлă вилĕмсĕр комедине çырнă, вăл вырăс драматургин чи хаклă пуянлăхĕ пулса тăрать. Унта писатель Российăра пуç пулса тăракан ушкăнсем социальнăй тата мораль тĕлĕшĕнчен пăсăлниччен, патша чиновникĕсен начар ăс-хакăлĕнчен тата улталас йăлинчен тăрăхласа кулнă. «Ревизор» комедири геройсем закона пăсаççĕ, хысна пурлăхне вăрлаççĕ, халăха çаратаççĕ.

Гоголь хăйĕн комедийĕнче правăçăр пурăнакан халăха пĕр чарусăр пăхăнтарса тăракан чиновниксене, ултавçăсен ушкăнне пĕр хĕрхенмесĕр питленĕ.

«Ревизорти» персонажсем Гоголь пурăннă вăхăтра çеç мар, каярахпа та типлă сăнарсем пулнă. Гоголь хăех Хлестаков сăнарĕ ун евĕрлĕ çынсене питлемелли сăнар пулнине палăртнă. Городничисемпе держимордăсем çĕрсе пыракан капитализмлă çĕршывсенче ку таранччченех пуç пулса тăраççĕ.

Гоголĕн чи чаплă произведенийĕ «Вилĕ чунсем» поэми пулса тăрать. Писатель унта маниловсен, коробочкăсен, плюшкинсен, собакевичсен, ноздревсен, чичиковсен тата ытти кахал, хытă кăмăллă, укçа-тенкĕшĕн çунакан, крепостной хресченсене сăтканăн эксплуатацилекен паразитсен сăнарĕсене питех те тĕрĕс кăтартса панă.

Пĕчĕк штрихсемпе, эпизодла уйрăм сăнарсем урлă Гоголь «Вилĕ чунсем» поэмăра халăх массисен хăрушă, питех те чухăн пурнăçне кăтартса панă. Вăл çак шухăша палăртнă: крепостной право этеме пăсать. Патша цензури кансĕрленĕ пулин те, писатель çапах та крепостной хресченсен начар пурнăçне тата вĕсем крепостной строя хирĕç протестленнине кăтартса пама пултарнă.

«Вилĕ чунсем» поэма патша самодержавине, помещиксемпе чиновниксене усăн айăплакан акт пулса тăнă. Хăйĕн вилĕмсĕр произведенийĕнче Гоголь çакна кăтартса панă: çынна çын пусмăрлани çинче тытăнса тăракан пурнăç стройĕ ирĕксĕрех укçа-тенкĕшĕн хыпса çунасси, улталанасси, харпăр хăй уссишĕн кăна тăрăшасси, взяткăсем илесси, ĕмĕтсĕрленсе мул пухасси, харампырла пушă ларасси, пустуй ĕмĕтленесси тата ытти çавăн пек кăлтăксемпе усал туйăмсем çуратать.

Гоголь крепостной строя чунтан-чĕререн килĕштермен, вăл çав вăхăтрах Российăна питĕ вăйлă юратнă, ăна ирĕклĕ те телейлĕ курма ĕмĕтленнĕ. Писатель çакна ăнланса тăнă: çав мĕнпур чичиковсем, маниловсем, ноздревсем, собакевичсем тата ытти вĕсен евĕрлисем вырăс нацине палăртса тăмаççĕ; вырăс халăхĕшĕн, вĕсем пуç пулса тăнипе асапланакан вырăс халăхĕшĕн, çавсем пурте ют тата тăшман пулса тăраççĕ; вырăс халăхĕ хăйĕн вăйĕпе, хăйĕн кăмăлĕпе аслă та хăватлă, ăна урăхла, ирĕклĕ пурнăç кирлĕ. Гоголь хăйĕн тăван çĕршывĕн ырăрах малашлăхĕ çинчен ĕмĕтленнĕ, çав малашлăх пуласса çирĕп ĕненнĕ.

«Вилĕ чунсем» пĕтĕм Российăна чĕтретрĕ»—тесе çырнă Герцен. Реакциллĕ пичет Гоголе хĕсĕрлеме тапратнă. Ăна хӳтĕлесе Белинский статьясем çырнă. Аслă критик писателĕн произведенийĕ чăнчăн вырăс, нациллĕ произведени, халăх пурнăçĕн вăрттăн кĕтесĕнчен туртса кăларнăскер, вăл чăн-чăн тĕрĕс, патриотла произведени, чăнлăха витсе тăракан пĕркенчĕке пĕр хĕрхенмесĕр сирсе пăрахакан, вырăс пурнăçĕн хаклă енĕсене çав тери юратма вĕрентекен произведени пулнине курса тăнă.

Хăйĕн ĕмĕрĕн юлашки çулĕсенче Гоголь вырăс обществин учителĕн, вĕрентекенĕн позицийĕсем çинче юлайман. Реакционерсен влиянине лексе, хăй пурăннă саманари обществăри лару-тăрăва ăнланса илме пултараймасăр вăл 1846 çулта «Туссем патне çырнă çырусенчен суйласа илни» ятлă, хăйĕн идейисем тĕлĕшĕнчен йăнăш кĕнеке пичетлесе кăларнă.

Çак реакциллĕ кĕнекене ответлесе, Белинский писателе чĕнсе каласа хăйĕн паллă çырăвне çырнă. Çав çырăва кайран В. И. Ленин революцичченхи Российăри цензурăсăр демократиллĕ пичетĕн чи лайăх произведенийĕсенчен пĕри тесе хакланă. Чун ыратнипе тата çав тери тарăхса, Белинский Гоголь патне вăл йăнăшни çинчен, Российăра крепостной правăпа самодержавие пĕтерме кирли çинчен, халăха ирĕклĕх тата вĕренӳ кирли çинчен, вырăс обществи писателе хăйне самодержавирен хӳтĕлекенĕ вырăнне хуни çинчен çырнă. Аслă революционер-демократ Гоголе каллех малтанхи пек мухтавлă писатель-сатирик ĕçĕсене тума тытăнма чĕннĕ. Анчах ĕç вĕçне çитсе пынă... Пывăр чирлесе, томиçе çултан Гоголь вилнĕ. Вилес умĕн темиçе кун маларах вăл «Вилĕ чунсем» поэмăн иккĕмĕш томне çунтарса янă.

Ирĕклĕхшĕн пыракан вăл вăхăтри юхăмшăн Гоголĕн реализмĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. «Ревизор» тата «Вилĕ чунсем» произведенисем вырăс обществин малта пыракан вăйĕсене самодержавипе, крепостной правăпа кĕрешме пулăшнă.

Гоголĕн хаяр сатири Российăри крепостной строя кăна мар питленĕ, вăл пуç пулса тăракан эксплуататорсен класĕсем иртĕхсекен тата сăткăнла туйăмсем аталанакан кирек мĕнле общество йĕркине те питленĕ. Гоголь феодалла-крепостникла стройăн ăшĕнче буржуалла-капитализмлă çĕнĕ отношенисене витсе тăракан пĕркенчĕке уçса кăтартнă. Çав отношенисем иртнĕ ĕмĕрĕн 30—40-мĕш çулĕсенче вырăс пурнăçĕнче хытă палăрнă ĕнтĕ.

Гоголь пирĕн саманари вулакана империализмлă çĕршывсенчи çын чунĕсемпе суту-илӳ тăвакан, миллионшар простой çынсене хăйсем хатĕрленекен пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ вăрçăра вĕлерсе пĕтерме тăрăшакан ку чухнехи чичиковсене курма пулăшать. Белинскиех Чичиков сăнарĕн пĕтĕм тĕнчери пĕлтерĕшне кăтартнă. «Кĕнеке лавккинче итленĕ литература калаçăвĕнче» вăл Англипе Францири пуç пулса тăракан деятельсем çинчен çапла çырнă: «Çав чичиковсемех, анчах урăх тумтирпе: Францине Англире вĕсем вилĕ чунсем сутăн илмеççĕ, парламента ирĕклĕ (Белинский çапла иронилесе паллă тăвать—С. П.) суйланă чухне чĕрĕ чунсене сутăн илеççĕ. Пĕтĕм уйрăмлăх цивилизацире кăна, чăннипе каласан, пимĕнле уйрăмлăх та çук. Парламентра ларакан киревсĕр çын земски судра ларакан мĕнле те пулин киревсĕр çынран нумайрах вĕренни; анчах чăннипе илсен вĕсем иккĕшĕ те пĕр-пĕринчен ыррă мар».

Гоголь — пĕтĕм тĕнчипе паллă писатель. Вăл этемлĕх культурине пысăк вăй-хал хунă.

Гоголь творчестви халăхсем хушшинчи культурăллă çыхăнăва тата туслăха çирĕплетме пулăшать. Пĕтĕм Тĕнчери Мир Совечĕн юлашки сессийĕнче Гоголь вилнĕренпе çĕр çул çитнĕ май, ăна пур çĕршывсенче те чысласа асăнасси çинчен решени йышăнни ăнсăртран мар. Вырăссен аслă писателĕ-гуманисчĕ ирĕклĕх идеалĕсемшĕн, культурăна тата çутта кăларас ĕçе аталантарассишĕн, çынсен тивĕçлĕхĕшĕн кĕрешекен мĕнпур тӳрĕ кăмăллă çынсен тусĕ тата союзникĕ пулса тăрать.

С. ПЕТРОВ,
филологи наукисен кандидачĕ, СССР Наукăсен Академийĕн пĕтĕм тĕнче литературин А. М. Горький ячĕпе тăракан Институт директорĕн заместителĕ.

Типĕ çырмасене ишĕлме чарасси—питех те кирлĕ ĕç

Пирĕн республика территорийĕнче, уйрăмах çурçĕрти тата вăтаçĕрти районсенче, типĕ çырмасем нумай. Вĕсем йышăнакан лаптăк 96 пин гектартан иртет. Вăл шутран çулсерен ишĕлсе пыракан типĕ çырмасем—15.5 пин гектар, вĕсенчен колхозсен çĕрĕсем çинче 13,4 пин гектара яхăн шутланаççĕ. Вĕсем пысăкланнă май колхозсенчи акмалли çĕр, çарансен лаптăкĕ пĕчĕкленсе пырать. Типĕ çырмасен тĕпĕ пĕрмай çийĕнсе пынине пула, вĕсем тарăнланнăçемĕн тарăнланаççĕ. Çакăн пирки çĕр айĕнчи шывсен шайĕ тарăна каять, тăпрари шыв режимĕ япăхланать. Çурхи шыв тата çумăр шывĕ типĕ çырмаран юхтарса каякан тăпра айлăмри çарансем çине ларса юлать, юшкăн ларнă пирки утă тухăçлăхĕ чакать.

Колхозсен çĕрĕ çинче ишĕлекен çырмасем пулни тракторсемпе тата ытти ялхуçалăх машинисемпе тухăçлă ĕçлеме хытă кансĕрлет. Типĕ çырмасем нумай пулни тăпра сийне шывпа, çилпе çийĕнме пулăшать. Юр шывĕ тата вăйлă çумăр хыççăнхи шывсем çулсерен тăпран чи лайăх, чи вĕрпеклĕ сийне ишĕлтереççĕ, тăпрари тутлăхлă япаласене нумай юхтарса каяççĕ, çавна пула уя кăларакан удобренисен усси пĕчĕкрех пулать. Кунсăр пуçне тырпулă ӳсме кирлĕ нӳрĕ те пĕтет. Çапла вара ялхуçалăх культурисен тухăçлăхĕ чакать, колхозсем сиен кураççĕ.

Хуçалăхăн социализмла системи ялхуçалăхĕнче наука тата техника çитĕнĕвĕсемпе усă курма пур майсене те туса пачĕ. Коллективлă шутра хуçалăх условийĕсенче çырмасене ишĕлме чарас тĕлĕшпе тумалли пысăк ĕççене план тăрăх пурнăçласа пыма май пур.

СССР Министрĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «ССР Союзĕн Европа пайĕнчи çеçенхирлĕ тата вăрман-çеçенхирлĕ районĕсенче яланах вăйлă тырпул туса илме уй-хире шăрăхран хӳтĕлекен вăрмансем лартасси, курăксем акмалли уйлă пусă çаврăнăшĕсем, пĕвесемпе кӳлĕсем тăвасси çинчен» йышăннă историллĕ постановленирĕ тăпрана шывсем çисе ишĕлтернипе кĕрешес, типĕ çырмасене çирĕплетес, ишĕлтернĕ тăпрасене лайăхлатас ыйтусем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Калас пулать, пирĕн республикăри колхозсенче çырмасене ишĕлме чарас, тăпрасене шывпа çийĕнме парас мар шутпа ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен. Ку тĕлĕшпе туса иртермелли ĕççене колхозсенче палăртмаççĕ. Уйрăм колхозсенче çак тĕлĕшпе хăшпĕр ĕççем тăваççĕ пулин те, мĕнпур ĕççен комплексне пурнăçламаççĕ, çавăнпа та туса иртернĕ ĕççен усси пысăк пулмасть. Наукăпа практика çакна кăтартса параççĕ: мĕнле те пулин ĕçе хăй тĕллĕн мар, комплекспа, пĕтĕмĕшпе пурнăçласан кăна унăн усси пысăк пулать.

Хăшпĕр колхозсенче çырмасене ишĕлме чармаççĕ кăна мар, тата çырмасемпе тăвайккисенчи вăрмансене те сыхламаççĕ, касса пĕтереççĕ. Çĕре сухаласа çемçетнĕ чухне тăвайккисенчи тăпрана шыв çисе кайма пултарассине асра тытмаççĕ.

Чăваш республикин условийĕсенче ишĕлекен типĕ çырмасене ишĕлме чарни — яланах пысăк тухăçлă ялхуçалăх культурисем ӳстерес тĕлĕшпе тумалли чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри пулать. Çырмасене ишĕлме чарас тĕлĕшпе пурнăçламалли ĕççене палăртса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ кашни районта туса иртермелли ĕççен планне çирĕплетрĕ. Вăл план тăрăх, 1952—1955 çулсенче колхозсен çырма-çатрасенче 3,9 пин гектар çĕр лаптăкĕ çинче йывăç лартмалла, 1952 çулта 500 çырма пуçне тата 313 çырма тĕпне çирĕплетмелле, кăçал 10 пин гектар çĕр лаптăкĕ çинче шыва тытса тăма тăвайккисене урлă тата хĕреслесе сухаламалла.

Çак планпа килĕштерсе, райсовет исполкомĕсен тата районти ялхуçалăх пайĕсен ялхуçалăх специалисчĕсемпе пĕрле кашни колхозра, вырăнти условисене шута илсе, çырмасене ишĕлме чарас тĕлĕшпе тумалли ĕççен комплексне палăртмалла. Çав плансенче, чи малтан, çакăн пек ĕççене кăтартни кирлĕ: çырмасенче тата тăвайккисенче йывăççем лартасси; уйсенче тăвайккине урлă вăрман тăрăхĕсем тăвасси; уйсенче тăвайккине урлă нумай çул ӳсекен курăксен тăрăхĕсем акасси; çурхи тата çумăр шывне чарма ишĕлсе пыракан çырма пуçĕсенче валсем тата шыва урăх çулпа яма канавсем тăвасси; çырма пуçĕсенче шыв сикнĕ тĕле вăлаксем лартасси; çырма тарăнланасран ăна урлă çатанпа, йывăçран тата тăпра купаласа пĕчĕк пĕвесем тăвасси; çырма сыранĕсене çирĕплетме курăксем акса çеремлентересси, çатан авса тунă клеткăсене чул тултарасси.

Тума палăртнă ĕççене колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче сӳтсе явса çирĕплетес пулать. Çак ĕççене колхозăн производство планне кĕртмелле, вĕсене туса иртерме кирлĕ укçа-тенкĕне тупăшсемпе расходсен сметинче кăтартмалла. Çирĕплетме палăртнă çырмасене уй-хир бригадисене çирĕплетсе памалла. Бригадăсем çав вырăнсенче тивĕçлĕ ĕççем тума пултарччăр.

Çырмасене ишĕлме чарас тĕлĕшпе тумалли ĕççен шутĕнче çырма-çатрасенче йывăç лартни пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та çитес 3—4 çул хушшинче кашни колхозрах мĕнпур типĕ çырмасенче йывăç лартса ӳстерес пулать. Вăрăм ĕмĕрлĕ йывăççемсĕр (юман, хыр) пуçне, хăвăрт çитĕнекен йывăççем лартмалла. Ишĕлекен çырма пуçĕсенче—йăмрапа тополь, çырма тĕпне—хăва, чăнкă тăвайккисенче—чие çырли тата тымартан хунакан ытти йывăççем лартмалла. Тăвайккисенче çимĕç йывăççисем ӳстермелле.

Хăшпĕр ял Совечĕсем тата колхоз правленийĕсем ялти çырмасенче ӳсекен йывăççене касма ирĕк парса тĕрĕс мар тăваççĕ. Кăçалтан пуçласа ялсенчи типĕ çырмасенче те йăмра, тополь тата ытти йывăççем лартса хăвармалла.

Çырма-çатрасенче йывăç лартас ĕçре колхозсене вăрман хуçалăх организацийĕсем пулăшма тивĕçлĕ. Вĕсен лартмалли çамрăк йывăççем памалла, ĕçе техника тĕлĕшĕнчен ертсе пымалла. Кунпа пĕрлех вĕсен çырмасенчи вăрмансене сыхласа хăвармалла.

Типĕ çырмасем ишĕлсе пынипе чарас, тăпран хаклă пайĕ шывпа çийĕнсе пĕтессерен сыхланас тĕлĕшпе йывăççем лартнисĕр пуçне курăк акмалли уйлă çĕрĕç системин пур элеменчĕсене те пурнăçлани пысăк вырăн йышăнать. Кĕрпеклĕ тăпра кĕрпексĕр тăпра пек мар, сахалрах çийĕнсе ишĕлет, вăл юрпа çумăр шывне лайăх сăхса илет, çапла вара шыв çиелтен сахалтарах юхать. Çавăнпа та тăпран кĕрпеклĕхне лайăхлатас шутпа колхозсенче курăк акмалли уйлă пусă çаврăнăшĕсем йĕркелени те ишĕлекен типĕ çырмасемпе кĕрешес ĕçре пысăк вырăн йышăнать.

Типĕ çырмасем чылай чухне çул хĕрринчи канавсем çийĕнсе шырлан пулнинчен пуçланса каяççĕ. Анчах çул-йĕр организацийĕсем çакăн çине пăхмаççĕ. Çул-йĕр тунă чухне çак ĕççене туни кирлĕ: шыв сикекен вырăнсене чул сармалла, тăпра çийĕнсе ишĕлме пултаракан вырăнсенче çатан авса пĕвесем тумалла, йывăççем лартса ӳстермелле.

Типĕ çырмасене ишĕлме чарас тĕлĕшпе тумалли ĕççене пурнăçлама агрономсемпе агролесомелиораторсем пысăк пулăшу пама пултараççĕ. Вĕсем колхозсенче ĕçе йĕркелесе, ертсе пыма тивĕçлĕ.

Малта пыракансен опычĕнчен çакă курăнать: уй-хире хӳтĕлекен тата çырмасене çирĕплетекен вăрман тăрăхĕсем туни, курăк акмалли уйлă пусă çаврăнăшĕсем йĕркелени, çырмасен пуçĕсенче пĕвесем туни тăпра çийĕнсе пĕтессине нумай чакарма май парать.

Çак ĕççене туса иртерни çавăн пекех колхоз çĕрĕсемпе тĕрĕс усă курма, сад ӳстерессине тата пулă ĕрчетессине вăйлатма, тупăш ытларах илме пулăшать. Республикăри нумай колхозсем тăвайккиллĕ, тырă акма юрăхсăр вырăнсенче çимĕç йывăççисемпе çырла лартса ӳстереççĕ, пысăк тупăш илеççĕ. Сăмахран, Кувакино районĕнчи Суворов ячĕпе тăракан колхоз тăвайккисенче 44,8 гектар сад ӳстерет. Çавăн пек çĕрсем çинче Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе тăракан, Чкаловски районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» ялхуçалăх артелĕсем те вуншар гектар ытла садсем тунă. Ку колхозсем çав садсенчен тупăш илме тытăннă.

Анчах та малта пыракан колхозсен опытне çителĕксĕр пропагандăлаççĕ, ытти колхозсенче пурнăçа кĕртме тăрăшмаççĕ. Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин ялхуçалăх пропагандин управленийĕ тата районсенчи ялхуçалăх пайĕсем ялхуçалăх пропагандин групписем ишĕлекен çырмасене çирĕплетес, тăпрана шывпа çийĕнсерен сыхлас тĕлĕшпе малта пыракан колхозсем туса иртернĕ опытсене пĕтĕçтерме, ытти колхозсенче сарма питех те çителĕксĕр тăрăшаççĕ.

Çырмасене ишĕлме чарни, тăпрана шывпа çийĕнсе япăхланма памасăр вăл ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата обществăллă выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстерессишĕн, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла тĕреклетессишĕн кĕрешни пулать. Çавăнпа та вăл ĕççене пурнăçлама республикăри совет тата ялхуçалăх органĕсен, вăрман хуçалăхĕсен, ялхуçалăх специалисчĕсен тата ялти общественносăн вăйне мобилизацилемелле.

Агроном М. ИВАНОВ.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРЕН ГЛАВНӐЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн главнӑй командованийӗ паян ҫапла пӗлтернӗ: Халӑх ҫарӗн соединенийӗсем Китай халӑх доброволецӗсен чаҫӗсемпе пӗрле пур фронтсенче те Америкӑпа Англи интервенчӗсене тата Ли Сын Ман ҫарӗсене хирӗҫ оборонӑра тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ, тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсене тата техникине чылай пӗтереҫҫӗ.

Паян самолетсене хирӗҫ ҫапӑҫакан салтаксен отрячӗсем хӗвеланӑҫӗнчи ҫыран районӗнче тӑшманӑн икӗ самолетне персе ӳкернӗ.

Америка ҫар преступникӗсене хытӑ айӑпласа наказани памалла

Мире сыхлас тӗлӗшпе Корейӑра ӗҫлекен комитетӑн генеральнӑй секретарӗн заявленийӗ

ПЕКИН, февралӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчӗ февралӗн 26-мӗшӗнче ҫакӑн ҫинчен пӗлтернӗ:

Февралӗн 25-мӗшӗнче мире сыхлас тӗлӗшпе Корейӑра ӗҫлекен комитетӑн генеральнӑй секретарӗ Ан Хан Кван заявлени тунӑ. Американецсем Корейӑра бактерисем ертнӗ хурт-кӑпшанкӑсене сарни халиччен тунӑ мӗнпур преступленисенчен чи тискерри пулать, тенӗ вӑл.

Американецсем Корейӑра хӑйсен интервенцине пуҫланӑранпа тӗнчери ҫӗршывсен килӗшӗвӗсене пӗрмаях пӑсаҫҫӗ, вӗсен ҫӗнӗ преступленийӗ—Корейӑри фронтра тата тылра чумапа холера бактерисене сарни—чи тискер преступлени пулса тӑрать, тенӗ Ан Хан Кван.

Вӑрҫӑра бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнине хирӗҫ

Китай халӑхӗ Америка интервенчӗсен преступникла ӗҫӗсене хирӗҫ протестлет

ШАНХАЙ, февралӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Америка агрессорӗсем Корейӑра бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнӑшӑн Китай халӑхӗ хытӑ тарӑхать. Кун пирки Шанхайри хаҫатсем статьясемпе заявленисем нумай пичетлеҫҫӗ.

Паян «Дагунбао» хаҫат умстатьяра ҫапла ҫырать: Америка империалисчӗсем хушшипе вӗсен ҫарӗ Корея халӑхне пысӑк асап кӳрет, ҫавӑнпа пӗрлех тӗнчери мӗнпур халӑхсене тарӑхтарать. Вӗсене преступлениллӗ ӗҫсем тума халех чарас пулать, ахаль вӗсем тӗнчен ытти пайӗсенче те ҫавӑн пек тискер ӗҫсем тума пултараҫҫӗ.

Америка империалисчӗсен тискер ӗҫӗсене чарса лартма тӗнчери мире юрататакан мӗнпур халӑхсен васкавлӑ мерӑсем йышӑнас пулать.

«Цзефанжибао» хаҫатра Шанхайри медицина работникӗсен профсоюзӗн председателӗ У Тяо-цан каласа панине пичетленӗ. Вӑл Шанхайри мӗнпур медицина работникӗсен ячӗпе ҫапла калать: эпир сиенлӗ бактерисене пурне те пӗтерсе пырса, чир-чӗрсене хирӗҫ кӗрешетпӗр, ҫынсене асапран хӑтарма тӑрӑшатпӑр. Ҫав вӑхӑтрах Америка банличӗсем бактерисемпе Корея халӑхне вӗлерсе пӗтерме усӑ кураҫҫӗ. Америка империалисчӗсен ҫавнашкал тискер преступленийӗсем пире тата хытӑрах тарӑхтараҫҫӗ, пирӗн Америка агрессине хирӗҫ тата Корейӑна пулӑшассишӗн кӗрешес ӗҫри шухӑш-кӑмӑл тата ытларах ҫирӗпленсе пырать. Тӑшмана пур ӗҫӗр хатарма пирӗн вӑйсем ҫителӗклӗ, тет вӑл.

«Цзефанжибао» хаҫатра Пӗтӗм Китайри демократиллӗ хӗрарӑмсен федерацийӗн Шанхайри уйрӑмӗн заявленийӗ пичетленсе тухнӑ. Унта ҫапла каланӑ: Америка империалисчӗсен ҫак преступленийӗ вӗсем Китайпа Корея халӑхӗсен чи хӑрушӑ тӑшманӗсем пулнине, вӗсем тӗнчери мире юратакан мӗнпур халӑхсен тӑшманӗсем пулнине кӑтартса парать. Заявлени пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсене Америка империалисчӗсен преступникла ӗҫӗсене сивлеме чӗнет.

Шанхайри хаҫатсем вулакансен ҫырӑвӗсене пичетленӗ, вӗсенче Америка империалисчӗсем Корейӑра бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнине хирӗҫ протестленӗ.

ШАНХАЙ, февралӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Сутҫантайӑна тӗпчесе вӗренекен наука обществисен Пӗтӗм Китайри федерацийӗн Шанхайри уйрӑмӗ тата наукӑпа техника пӗлӗвӗсене саракан общество паян пӗрле ҫырнӑ заявлени пичетлесе кӑларнӑ. Унта вӗсем Корейӑра бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ куракан Америка агрессорӗсене намӑслантарса питлеҫҫӗ, ҫав преступлениллӗ ӗҫсене организацилекенсене хытӑ айӑпласа наказани пама ыйтаҫҫӗ.

«Вэньхуйбао» хаҫат паян государствӑн Шанхайри «Цзяотун» текен институтчӗн преподавателӗсемпе студенчӗсем Америка империалисчӗсен тискер ӗҫне пирки — Корейӑра бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курнӑ пирки хытӑ тарӑхса протестлени ҫинчен пӗлтерет.

Институтра митинг пулнӑ. Унта инженерно-строительнӑй факультет деканӗ Чжу Ухуа профессор сӑмах тухса каланӑ. Вӑл Америка агрессорӗсем, Корейӑра бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курса вӑрҫма пуҫласа, хӑйсенчен малтарах Япони агрессорӗсем пынӑ ҫулпах пыраҫҫӗ, вӗсем пекех тискер ӗҫсем тӑваҫҫӗ. Ҫав ҫул ҫине тӑнӑ Америка империалисчӗсене те, Япони агрессорӗсене аркатса тӑкнӑ пекех, ҫӗмӗрсе тӑкӗҫ, вӗсене суд умне тӑратса наказани парӗҫ, тенӗ вӑл.

ПЕКИН, февралӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентстви ҫапла пӗлтерет:

Америка агрессорӗсем Корейӑра бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курса преступлениллӗ ӗҫсем тунине хирӗҫ питӗ тарӑхса протестленӗ ҫырусем Китайри пур вырӑнсенчен те килсе тӑраҫҫӗ.

Ҫурҫӗр-Хӗвелтухӑҫ Китайри халӑх организацийӗсемпе демократиллӗ тӗрлӗ партисен комитечӗсем хӑйсем пичетлесе кӑларнӑ заявленисенче: Америка империалисчӗсем преступлениллӗ ӗҫсем туса, вӗсем Корейӑри перемири ҫинчен пыракан калаҫусене юриех тӑснине, вӗсем вӑрҫа тата анлӑрах сарма васкасах хатӗрленнине тепӗр хут кӑтартса параҫҫӗ, Америка империалисчӗсене ҫавӑн пек тискер ӗҫсем тунӑшӑн ответ тыттарӗҫ, тесе ҫыраҫҫӗ.

Нанкинри ученӑйсемпе медицина работникӗсем, Хубэй провинцийӗнчи тата Китайӑн вӑтаҫӗртипе кӑнтӑрти провинцийӗсенчи халӑх организацийӗсем, Китай Хӗрлӗ Хӗрес обществин хальхи вӑхӑтра Корейӑра ӗҫлекен медицина отрячӗсем ҫав тискер ӗҫсем пирки протестлесе ҫырусем янӑ. Вӗсем пурте Америка агрессине хирӗҫ хытӑ кӗрешме тата Корейӑна пулӑшу парас ӗҫе вӑйлатма, икӗ хут ытларах тӑрӑшма сӑмах параҫҫӗ.

ПЕКИН, февралӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Синьхуа агентстви ҫакӑн ҫинчен пӗлтерет:

Пӗтӗм Китайри профсоюзсен федерацийӗ Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен федерацийӗн генеральнӑй секретарӗ Луи Сайяна телеграмма янӑ. Унта ҫапла каланӑ:

«Корейӑри вӑрҫӑра хӑйсене аркатса тӑкассинчен хӑтӑлас тесе, Америка империалисчӗсем тӗнчери ҫӗршывсен килӗшӗвӗсене пӑсаҫҫӗ, бактериллӗ хӗҫпӑшалпа усӑ курса Корея халӑхне вӗлерсе пӗтерес шутпа фронт линийӗнче тата тылра пӗрмаях чума холера бактерийӗсене нумай сараҫҫӗ. Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен федерацийӗ ку пирки Америка правительствине хытӑ протестлесе заявлени ярасса, кунсӑр пуҫне тата Пӗтӗм тӗнчери профсоюзсен федерацийӗ тӗнчери мӗнпур ӗҫҫыннисене Америка империалисчӗсен пите тискер преступленийӗсене чарса лартма витӗмлӗ мерӑсем йышӑнма чӗнессине эпир шанса тӑратпӑр».

Пӗтӗм Китайри химипромышленноҫӗн ӗҫлекенсен профсоюзӗн тата Пӗтӗм Китайри сывлӑх сыхлас ӗҫри работниксен профсоюзӗн комитечӗсем хӑйсем пӗрле ҫырнӑ телеграммине Пӗтӗм тӗнчери химипромышленноҫӗн профсоюзсен пӗрлешӗвӗн председателӗнчен тата генеральнӑй секретарӗнчен ярса панӑ. Ҫав телеграммӑра вӗсене пӗтӗм тӗнчери химипромышленноҫӗн рабочисемпе инженерӗсене тата тӗнчери медицина работникӗсене Америка агрессорӗсен пите тискер преступленийӗсене чарса лартас тӗллевпе конкретнӑй мерӑсем йышӑнма чӗнмешӗн ыйтнӑ.

Англипе Совет Союзӗ хушшинчи суту-илӳ ҫинчен „Дейли уоркер" хаҫат мӗн ҫырать

ЛОНДОН, февралӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). «Дейли уоркер» хаҫат Англипе Совет Союзӗ хушшинчи суту-илӳ ҫинчен хӑйӗн дипломати ыйтӑвӗсене сӳтсе явакан корреспонденчӗ ҫырнӑ статьяна пичетленӗ. Статьяра ҫакна палӑртнӑ: Совет Союзӗ Англие таварсем нумайрах сутма тӑрӑшать. Совет ҫӗршывӗ 1950 ҫулта Англие 34 миллион фунт стерлинглӑх тавар сутнӑ пулсан, 1951 ҫулта вара—60 миллион фунт стерлинглӑх тавар сутнӑ. Ҫав вӑхӑтрах Англи Совет Союзне тавар сутасси чакнӑ. Англи 1950 ҫулта 11 миллион та 560 пин фунт стерлинглӑх тавар сутнӑ пулсан, 1951 ҫулта 3.580 пин фунт стерлинглӑх кӑна тавар сутнӑ. Англи правительстви США Хӗвеланӑҫӗнчи ҫӗршывсене Хӗвелтухӑҫӗнчи государствисемпе суту-илӳ тума чарнине пурнӑҫласа пыни—долларпа тӗп ҫӗршывӗсемпе суту-илӳ туманни Англие пысӑк сиен кӳрет, тесе ҫырать корреспондент.

Англи Совет Союзӗпе тата халӑх демократи ҫӗршывӗсемпе суту-илӳ тунине анлӑлатсан, Англие усӑллӑ пулӗччӗ, тесе ҫырать корреспондент.

Демократиллӗ Германи Республики правительствин заявленийӗ

БЕРЛИН, февралӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви ҫапла пӗлтерет:

Демократиллӗ Германи Республикин Министрӗсен Совечӗн паянхи ларӑвӗнче правительство ячӗпе ҫакӑн пек заявлени тума йышӑннӑ:

Министрсен Совечӗ Демократиллӗ Германи Республики правительствин 1952 ҫулхи февралӗн 13-мӗшӗнчи ҫырӑвӗ ҫине, Германипе мирлӗ договор тӑвас ӗҫе васкатма ыйтни ҫине, СССР Правительстви пирӗнпе килӗшни ҫинчен пӗлтерсе панӑ ответа ырлать.

Мирлӗ договор ҫуккипе тата Германи пайланса тӑнипе агрессиллӗ вӑйсем тӗнчери ҫӗнӗ вӑрҫа пуҫарма тӑрӑшнӑ пирки Демократиллӗ Германи Республикин правительстви тӑватӑ аслӑ державӑна чӗнсе каланинче ҫакна шута илчӗ: пӗр тӑхтаса тӑмасӑрах мирлӗ договор туни Европӑра мирлӗ пурнӑҫа сыхласа хӑварнине тата ҫав вӑхӑтрах пӗрлӗхлӗ, никама пӑхӑнман, демократиллӗ тата мире юрататакан Германи государствине туса хунине пӗлтерӗччӗ.

Министрсен Совечӗ ССР Союзӗн Правительствине унӑн ҫӗнӗ заявленийӗшӗн, вӑл Германипе мирлӗ договор тӑвас тата Германирен пӗр государство туса хурас ӗҫе васкатма мӗн май килнине пӗтӗмпех тума сӑмах панӑшӑн тав тӑвать.

Министрсен Совечӗ СССР Правительстви мирлӗ договор тӑвас ӗҫе Германие хутшӑнтарма кирлӗ тесе шутлани ҫинчен тепӗр хут пӗлтернине те тав туса ырлать.

Совет Правительствин отвечӗ пӗтӗм нимӗҫ халӑхӗн чӗрисене хавхалантарать тата малашнехи пурнӑҫ пирки шанчӑк парать. Вӑл СССР Правительстви нимӗҫ халӑхне хӑйӗн пурнӑҫри пысӑк ыйтӑвне мирлӗ майпа йӗркелеме пӗрмаях хытӑ тӑрӑшса тата туслӑ пулӑшса пынине ҫӗнӗрен кӑтартса парать.

Пӗтӗм нимӗҫ халӑхӗн требованийӗпе килӗшуллӗн, Министрсен Совечӗ Германие тӗрӗслесе тӑракан ытти виҫӗ аслӑ держава правительствисенчен те вӗсем ку ыйту тӑрӑх ҫак ӗҫшӗн усӑллӑ ответ парассине, вӗсем Германипе мирлӗ договор тӑвас тата Германие ҫӗнӗрен пӗр государство туса хурас ӗҫе васкатма кирлӗ ӗҫсем тума тытӑнассине кӗтет.

Демократиллӗ Германи Республикин Министрӗсен Совечӗ нимӗҫ халӑхӗн пурнӑҫри пысӑк ыйтӑвӗсене мирлӗ майпа йӗркелес тӗллевпе пӗрмаях тӑрӑшса ӗҫлӗ.

Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн опека енӗпе ӗҫлекен советӗнче

НЬЮ-ЙОРК, февралӗн 28-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн опека енӗпе ӗҫлекен совечӗн вуннӑмӗш сессийӗ пуҫланнӑ. Сессие Англи представителӗ Бэрпс председатель пулса ертсе пырать.

Совет членӗсем чылайӑшӗ официальнӑй сӑмахсем тухса каланӑ хыҫҫӑн СССР представителӗ Солдатов совет ларӑвӗнчен гоминдан шайкин представительне кӑларса яма ыйтнӑ. Вӑл законлӑ йӗркесем тӑрӑх гоминдан представителӗ совет ларӑвӗсенче пулма пултарайманни ҫинчен каланӑ. Вӑл совет ларӑвне Китай Халӑх Республикин центральнӑй правительствин представительне чӗнме ыйтнӑ. Ҫав сӗнӗве хирӗҫ США представителӗ тухса каланӑ. Вӑл Китай Халӑх Республикин правительствине кӳрентерекен элеклӗ сӑмахсем каланӑ хыҫҫӑн, СССР сӗнӗвне совета пӑхса тухма пӗлл мар вӑхӑт хушши тӑхтаса тӑмалла, тенӗ.

Англи представителӗ Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен представителӗн сӗнӗвне хӳтӗленӗ.

Сэйр Китай пирки элеклесе каланине: Китайӑн Корейӑри ӗҫӗсем Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн принципӗсемпе килӗшсе тӑмаҫҫӗ тенине хирӗҫ ответлесе, Солдатов: Пӗрлешнӗ Нацисен Организацийӗн принципӗсене чӑннипе Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсем пӑсрӗҫ, вӗсем 1950 ҫулхи июнь уйӑхӗнче Корейӑра агрессиллӗ вӑрҫӑ пуҫларӗҫ, тенӗ.

Ку ыйтӑва нумай мар вӑхӑт хушши сӳтсе явнӑ хыҫҫӑн делегатсенчен ытларахӑшӗ сасӑланипе совет ССР Союзӗн сӗнӗвне пӑхса тухма пӗр пӗлл мар вӑхӑта тӑхтаса тӑрасси ҫинчен решени йышӑннӑ.

Унтан совет вӑхӑтлӑх кун йӗркине сӳтсе явма тытӑннӑ.

Дакки хулинчи пӑлханусем

КАРАЧИ, февралӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Пакистан правительстви урду йӑхӗнчи ҫынсен чӗлхине пӗтӗм Пакистаншӑн государствӑн тӗп чӗлхи тесе йышӑнма шутланӑ. Кун пирки Хӗвелтухӑҫ Пакистанра пурӑнакансем протестлеме тытӑннӑ, ҫавна хирӗҫ протестлес юхӑм анлӑ сарӑлнӑ. Урду йӑхӗн чӗлхипе Хӗвеланӑҫ Пакистанри халӑхӑн ытларахӑшӗ каласать, ҫав чӗлхене Хӗвелтухӑҫ Пакистанри бенгаль чӗлхипе калаҫакан халӑх пачах ӑнланмасть. Хӗвелтухӑҫ Пакистанри халӑх правительствӑран бенгаль чӗлхине те, урду чӗлхипе пӗртанах, государство чӗлхи тесе йышӑнма ыйтать.

Динаджпур, Майменсинг, Читтагонг, Камилл хулисенче тата ытти хуласенче митингсемпе демонстрацисем пулса иртнӗ. Демонстраци пухӑннисем правительство ӗҫӗсене питленӗ, бенгаль чӗлхине урду чӗлхипе пӗр тан государство чӗлхи тесе йышӑнма требовани лартнӑ.

Февралӗн 21-мӗшӗнче Хӗвелтухӑҫ Пакистанӑн тӗп хулинче—Даккире ҫав требование хӳтӗлесе демонстраци организациленӗ. Демонстрантсене салатса яма полици чаҫӗсене илсе пынӑ. Вӗсем пӑшалпа персе тата куҫҫулӗ юхтаракан газсем ярса демонстрантсене салатса янӑ. Полици демонстрантсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ чухне 26 ҫынна, пуринчен ытла студентсене, вӗлернӗ, 400 ҫынна яхӑн амантнӑ, 500 ҫынна тытса хупнӑ. Студентсен демонстрацине пӑшалпа персе, юн тӑкса салатса янине хирӗҫ протестленӗ ятпа февралӗн 23-мӗшӗнче Дакки хулинче пӗтӗмӗшле забастовка пулнӑ. Ҫав кун правительствӑн пӗр учрежденийӗ те ӗҫлемен, транспорт ӗҫлемен, суту-илӳ туман. Влаҫсем хулара пӗр кунлӑха вӑрҫӑ чухнехи пек йӗрке туса хунӑ, комендант ирӗк памасӑр васхине тата ҫӗрле урама тухса ҫӳреме чарнӑ, полицие пулӑшма ҫар чаҫӗсем илсе пынӑ.

Мирлӗ демонстрацие хутшӑннӑ ҫынсене полици пӑшалпа персе салатса яни, вӗсенчен чылайӑшне вӗлерни, амантни тата тытса хупни ҫӗршыври общественноҫа хытӑ тарӑхтарнӑ. Правительствӑн официальнӑй органӗ—«Доон» хаҫат вулакансене чӗлхе ыйтӑвне «йӗркелӗҫ» тесе ӗнентерет, ҫав пулса иртнӗ «хурлӑхлӑ ӗҫ ҫинчен манма» канаш парать.

Анчах Пакистанри прогрессивнӑй общественность Дакки хулинче пулса иртнӗ ӗҫ пирки хытӑ тарӑхвӑскер, ҫав юнлӑ событисене тӗплӗн тӗрӗслеме, студентсен демонстрацине пӑшалпа персе салатса янӑшӑн айӑплӑ ҫынсене наказани пама хытӑ ыйтать.

Хӗвеланӑҫ Германие ҫӗнӗрен хӗҫпӑшаллантарни мӗн патне илсе пыни ҫинчен

БЕРЛИН, февралӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). АДН агентстви Гамбургран пӗлтернӗ тӑрӑх, «Абендблатт» хаҫат «Хавхалантарман малашлӑх» ятлӑ умстатья пичетлесе кӑларнӑ. Умстатьяра Хӗвеланӑҫ Германи вӑрҫа хатӗрленме мӗн чухлӗ укҫа пӗтерни ҫинчен ҫырнӑ. Вӑрҫа хатӗрленмелли тӗллевсене пурнӑҫлама 11,25 миллиард марка тата Хӗвеланӑҫ Берлинра ҫар плацдармӗ тума 1,4 миллиард марка расходлама палӑртнӑ. Ҫавӑн чухлӗ укҫа пухма налогсене ӳстермелле пулать, тет хаҫат. «Анчах налогсене текех ӳстерме май ҫук. Хӗвеланӑҫ Германире халӑх тупӑшӗн кашни ҫын пуҫне тивекен пайӗ ахаль те хӗвеланӑҫӗнчи ытти ҫӗршывсенчинчен 40 процент каярах. Ҫапла вара, Хӗвеланӑҫ Германири халӑхӑн пурнӑҫӗ татах та ытларах начарланас хӑрушлӑх тухса тӑрать», тесе ҫырать хаҫат.

Италире 60 пин горняк забастовка тӑвать

РИМ, февралӗн 27-мӗшӗ. (ТАСС). Ӗнер Италире 60 пин горняк забастовка тума тытӑннӑ. Вӗсем ӗҫ укҫи ӳстерме ыйтаҫҫӗ. Вӗсен забастовки ҫак сӑлтавпа пуҫланнӑ: предприятисен хуҫисем срок тухнӑ коллективлӑ договора улӑштарас пирки рабочисен представителӗсемпе пӗрле калаҫусем иртттерме килӗшмен. Ҫавна хирӗҫ протестлес тата Сицилири кӳкӗрт шахтисенче ӗҫлекен горняксемпе пӗр шухӑшлӑ пулнине палӑртас ятпа пур ҫӗрте те забастовкӑсем пуҫланнӑ. Сицилири горняксем хӑйсен ҫемйисен пурнӑҫри чи кирлӗ прависемшӗн, ҫӑкӑршӑн, ӗҫ укҫи ӳстерме килӗшмен хуҫасене хирӗҫ 33 талӑк ӗнтӗ паттӑр кӗрешеҫҫӗ.

Италири мӗнпур горняксен забастовки 48 сехет хушши пымалла. Забастовка пуҫланнӑ май ҫӗршыври сӑрт-ту промышленноҫӗн тӗп районӗсенче—Тосканӑпа Сардинире ӗҫсем пӗтӗмпех чарӑнса ларнӑ. Унта «Карбозарда» обществин ҫӗр кӑмрӑкӗ шахтисенче ӗҫлекен 25 пин рабочи забастовка тӑвать. Бьелл районӗнчи (Пьемонт) пир-авӑр предприятийӗсенче ӗҫлекенсем 56 пин ҫын февралӗн 26-мӗшӗнче, юлашки эрнере виҫҫӗмӗш хут, 24 сехет хушши забастовка тунӑ. Вӗсем те ӗҫ укҫи ӳстерме ыйтаҫҫӗ.

ИТАЛИРИ ӖҪҪЫННИСЕМ США ХӖҪПАШАЛЕСЕНЕ ПУШАТМА КИЛӖШМЕҪҪӖ

РИМ, февралӗн 26-мӗшӗ. (ТАСС). Хаҫатсем ҫакӑн ҫинчен пӗлтереҫҫӗ: Италин «Монреале» пӑрахучӗ Генуя портне ҫитсе чарӑннӑ. Пӑрахут ҫинче США ран ҫар материалӗсем илсе пынӑ. Генуя портӗнче ӗҫлекенсем ӗнер ҫав пӑрахут ҫинчи ҫар материалӗсене пушатма килӗшмен.

США хӗҫпӑшал янине хирӗҫ протестленӗ ятпа портри грузчиксем забастовка тума тытӑннӑ. Пӑрахута пушатма влаҫсем ҫар чаҫӗсемпе полицие чӗннӗ.

Хамӑр республика тӑрӑх

Вӑрнар районӗнчи Хрущев ячӗпе тӑракан колхозра ӗне ферминче ӗҫлекенсем пушӑ вӑхӑтра илемлӗ литература кӗнекисене пӗрлешсе вулаҫҫӗ, сӳтсе яваҫҫӗ. Кӑҫал вӗсем Н. Островскин «Хурҫӑ мӗнле хӗрнӗ», Б. Полевойӑн «Чӑн-чӑн этем ҫинчен ҫырнӑ повесть» тата ытти кӗнекесене те вуласа тухнӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Фермӑра ӗҫлекенсем Куҫма Турханӑн «Йӑмраллӑ ял» романне пӗрлешсе вулаҫҫӗ. Вулаканӗ А. Волкова доярка.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчӗкӗ.

СССР Верховнӑй Совечӗн сессийӗ ячӗпе

КӲКЕҪ. Районти сыхӑну работникӗсем СССР Верховнӑй Совечӗн сессине ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ. Коллектив хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту анлӑ сарӑлчӗ. Вӗсем стахановла вахтӑна тӑрса ӗҫлеҫҫӗ.

Кашни работниках хӑй ҫине татӑклӑ обязательство илнӗ. Вера Васильева кулленхи ӗҫ нормине 200 процент таран, Нина Яковлева телефонистка 300 процент таран тултарса пыраҫҫӗ.

Шӗнерпуҫ ял Советӗнчи В. Иванов, Сталин ячӗпе тӑракан колхозри Г. Федотов письмоносецсем сесси ячӗпе ӑмӑртӑва тухса хӑйсен ӗҫне чылай лайӑхлатрӗҫ.

Тулик Хураскинчи сыхӑну уйрӑмӗнчи работниксем пӗррмӗш кварталти плана СССР Верховнӑй Совет сессийӗ уҫӑлнӑ кун тӗлне—мартӑн 5-мӗшне тултарма сӑмах пачӗҫ.

Н. НИКИФОРОВ.

ҪӖМӖРЛЕ. «Большевик» завод пилӗк ҫуллӑх плана тата 1951 ҫулхи плана ӑнӑҫлӑ тултарчӗ. Тӑвӑн ҫӗршыва планран ирттерсе чылай продукци панӑ.

Завод коллективӗ кӑҫал та хастарлӑ ӗҫлет, стахановецсен йышӗ уйӑхсерен ӳсе пырать.

СССР Верховнӑй Совечӗн сессийӗ ячӗпе социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, рабочисемпе служащисем хӑйсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пыраҫҫӗ. Чылайӑшӗ сесси уҫӑлнӑ кун тӗлне ҫур уйӑх планне тултарма сӑмах параҫҫӗ.

Завод коллективӗ халӗ ҫӗнӗ продукци—юманпа ҫӳҫерен экстракт туса кӑларассине йӗркелет.

Кашни рабочи Ковалевӑн, Левченкопа Мухановӑн меслечӗсемпе ӗҫлеме тӑрӑшать.

И. ЕВГЕНЬЕВ.

КАНАШ. «Красный воин» артель коллективӗ СССР Верховнӑй Совечӗн сессийӗ уҫӑлнӑ куна производствӑра пысӑк ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илес майпа социализмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗ. Кашни цехра пухусем пулса иртрӗҫ. Ҫак пухусенче артель коллективӗ сесси уҫӑлнӑ тӗле планран ирттерсе 30 пин тенкӗлӗх продукци туса кӑларма обязательство йышӑнчӗ.

Халӗ обязательствӑна пурнӑҫлассишӗн кашниех тӑрӑшса ӗҫлет. Ҫӗвӗ ҫӗлекен цех, пир-авӑр тӗртекен цех февраль уйӑхӗнчи производство планне ытлашшипех тултарчӗҫ, ҫитес уйӑх шучӗпе продукци туса кӑлараҫҫӗ. Ку цехсенчи Тербенева, Рямова тата Кошкина стахановкӑсем кулленхи ӗҫ нормине 160—180-шар процент тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Социальнӑй обеспечени работникӗсен республикӑри канашлӑвӗ

Ҫак кунсенче Шупашкарта социальнӑй обеспечени работникӗсен республикӑри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура Чӑваш АССР социальнӑй обеспечени министрӗ А. Воронцова юлташ республикӑри социальнӑй обеспечени органӗсен 1951 ҫулхи ӗҫӗсем тата малашнехи задачисем ҫинчен доклад туса пачӗ.

Прените 22 ҫын тухса каларӗ. Вӗсем социальнӑй обеспечени органӗсен ӗҫӗсене лайӑхлатас, пенсионерсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес тӗлӗшпе паха сӗнӳсем пачӗҫ.

Канашлура Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн председателӗн заместителӗ М. Андреев юлташ сӑмах каларӗ. Вӑл социальнӑй обеспечени органӗсен ӗҫӗсенчи чылай ҫитменлӗхсене палӑртрӗ, вӗсене хӑвӑрт пӗтерме кирли ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

Канашлу хыҫҫӑн район тата хула Совет исполкомӗсен социальнӑй обеспечени пайӗсенче ӗҫлекен работниксен тата сывлӑх енчен ӗҫе юрӑхлине тӗрӗслекен комиссисен (ВТЭК) председателӗсен семинарӗ пулса иртрӗ.

Колхозсенчен пӗлтереҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКИ. «Сталинец» колхоз иртнӗ ҫулта пысӑк тухӑҫлӑ кок-сагыз ӳстерчӗ. Ҫак техникӑллӑ культурӑран 180 пин тенкӗ тупӑш илнӗ. Ку вӑл колхоз илнӗ тупӑшран виҫӗ пайран пӗр пайӗнчен ытларах пулать.

Кок-сагыз бригадин членӗсем кӑҫал кашни гектартан 22 центнертан кая мар тымар кӑларса илме, икӗ ҫулхи плантацирен гектар пуҫне ҫӗршер килограмм кок-сагыз вӑрри пухса илме пулчӗҫ. Халӗ пур звеносем те ҫуракине тимлӗ хатӗрленеҫҫӗ.

В. ЕФИМОВА.

КУСЛАВККА. Иртнӗ ҫулта «Динамо» колхоз кашни гектартан ҫӗршер пӑт ытла тӗштырӑ туса илчӗ. Колхоз членӗсем кӑҫал тата вӑйлӑрах тырпул туса илес тесе ҫуракине лайӑх хатӗрленме тӑрӑшаҫҫӗ. Хирте чылай участоксенче икӗ-виҫӗ хут юр тытнӑ. Вырӑнти удобренисем чылай хатӗрлесе уя кӑларнӑ. Ку таранччен 700 центнера яхӑн минераллӑ удобренисем кӳрсе килнӗ.

И. МИРОНОВ.

МУРКАШ. Тивӗш ял Советӗнчи виҫӗ колхоз членӗсем пӗр артеле пӗрлешме йышӑнчӗҫ. Ҫӗнӗ колхоза Чапаев ятне пачӗҫ. Пӗрлешсе пысӑкланнӑ колхоз председателӗ пулма Зайцев агронома суйларӗҫ.

Икӗ ҫул каялла районта 86 колхоз пулнӑ. Вӗсем пурте пӗрлешсе пысӑкланчӗҫ. Халӗ районта 24 колхоз шутланать.

П. ЯКОВЛЕВ.

Ҫӗнӗ кӗнекесем

Чӑваш АССР государство издательствинче ҫакӑн пек ҫӗнӗ кӗнекесем тухнӑ.

Даниэл Дефо—Робинзон Грузо тинӗс ҫулҫӳревҫи пурнӑҫӗ тата вӑл курнӑ тӗлӗнмелле мыскарасем. Вырӑсларан В. Долгов куҫарнӑ. Редакторӗ—Г. Молостовкин. Кӗнекере 288 стр., тиражӗ 5.000 экз., хакӗ—4 т. 75 пус.

М. Ю. Лермонтов—Сӑвӑсем. Чӑваш поэчӗсем куҫарнӑ. Кӗнекере 80 стр., тиражӗ 3.000 экз., хакӗ 2 тен. 55 пус.

Хоккей вӑййипе республикӑра мала тухассишӗн

Февралӗн 27-мӗшӗнче Шупашкарти «Молния» спорт обществи стадионӗнче хоккей вӑййипе республикӑра мала тухассишӗн юлашки вӑйӑсем пуҫланчӗҫ. Шупашкарти «Динамо» спорт обществин хоккей команди Улатӑрти «Локомотив» спорт обществи командине 0:4 шутпа выляса ячӗ, стадион хуҫисем—«Молния» спорт обществи хоккейсчӗсем Ҫӗмӗрлери «Урожай» спорт обществи спортсменӗсене 8:1 шутпа ҫӗнтерчӗҫ.

Хоккей вӑййипе республикӑра мала тухассишӗн ирттерекен ӑмӑртура «Молния» спорт обществи команди малта пырать.

Пӗлтерни

Мартӑн 1-мӗшӗнче, каҫхине 8 сехетре, ВКП(б) хула комитечӗн парткабинетӗнче докладчиксемпе агитаторсем валли «Мартӑн 8-мӗшӗ—Пӗтӗм тӗнчери хӗрарӑмсен кунӗ» тема тӑрӑх инструктивлӑ доклад пулать.

Докладчик—М. Я. Буркова юлташ.

ВКП(б) хула комитечӗ.

Ответлӑ редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧӐВАШ ГОСУДАРСТВО АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ
Паян, мартӑн 1-мӗшӗнче, каҫхине вырӑсла спектакль
„Три сестры"
Спектакль 20 сехетре пуҫланать

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: ответлӑ редактор—0-67, ответлӑ редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—4-17, ял хуҫалӑх пайӗ—3-97, пропаганда пайӗ—8-61, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ—7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 00634 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.